24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
ИЮЛЬ
1
ЫТЛАРИКУН
152 (5867) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН. ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Фашизма çапса аркататпăрах!

Фашистла заправилăсен асса кайнă ушкăнĕ, вăрçăллă авантюрăсенче тăлланса ларса, хăйсене хăраса тăракан катастрофăран ухма çул тупаймасăр, пирĕн тăван çĕршыв çине ултавлăн тапăнчĕ. Аса çухатнă иккоксем, хăйсене хăйсем вĕлерес кун умĕнче тăраканскерсем, — Гитлер тата унăн ушкăнĕ хăйсен юлашки средствине кăларса хума шут тытрĕç.

Европăра тата Африкăра çарса янă вăрçă, халран яракан, икĕ çула пыракан вăрçă фашизма хăй ĕмĕтленнĕ çĕнтерĕве памарĕ. Германи çарĕсем турттса илнĕ çĕршывсенчи хăлăх массисен ирĕке юратакан чун-чавалĕ оккупантсен тимĕр ури айĕнче хăйĕн вăйне чакармарĕ, вăл вăрçă испытанийĕсемпе йывăрлăхĕсенче пиçĕхсе çирĕпленет.

Бельгире выçă хĕрарăмсен демонстрацийĕсем пулса иртеççĕ. Данире «çăкăрçăр пурăнмалли кунсем» туса хунине хирĕç халăх уççăнах протест тăвать. Шкулсенчен казарăмсем туса хунă Грецире, шкулсенчен тĕрмесем туса хунă Румынире халăхăн мĕнпур сийĕсем хушшинче хаяр çилĕ ӳссе пырать.

Фашистла вăрă-хурахсем Голландирен, Венгрирен, оккупацилĕнĕ Франциран, Чехирен, Польшăран чĕтăваран тата продовольствин юлашки чĕрепиĕкĕсене турттарса каяççĕ, çав çĕршывсенчи тĕп халăха выçса вилмелли условисенче тăратса хăвараççĕ. Хăйсен литературине, искусствине, науки не ӳстерсе çитĕнтернĕ çĕршывсене ирĕкĕрлесех фашистла тăмсай шухăшăн паехĕ çине лартнă, сывă, вăйлă, пурнăçра çирĕпĕн тытăнса тăма пултаракан халăхсене, çавăн пекех, Германири пусмăр айĕнчи халăха ăс-тăншăн кирлĕ апат вырăнне фашистла мракобесине сĕнеççĕ.

Хăйсен пурăнăсĕсене организованно çарагнăшăн та, хăйсем нумай ĕмĕрсем хушшинче ӳстерсе çитĕнтернĕ культурăран мăшкăлласа кулнăшăн та халăхсем икĕ уралла тискер кайăксен гитлерла ушкăнне нихăçан та каçарас çук. Пусмăрти Европăри халăсемпе илсенче хаяр çилĕ хăлхемĕсем татти-сыписĕр хыпăна-хыпăна тухаççĕ. Çак хĕлемсенчен иртерех е каярах пуçланакан пушара гитлерла бандитсем сӳнтерме пултарас çук.

Хăйĕн çĕрне асса кайнă ирсĕр тăшманран хӳтлесе, Совет Союзĕ отечественнăй таса вăрçăна тухрĕ. Пĕтĕм Совет халăхĕ отечественнăй аслă вăрçăна çирĕп пĕрлĕхпе, чăтăмлăхпа тата вĕçĕ-хĕррисĕр хăюллăхпа çĕкленсе тăчĕ, çакă вăл фашистла изуверсен пусмăрĕ айне лекнĕ нацисемшĕн хăватлă моралле пулăшу пулса тăрать.

Гитлерла çарсен «никам çĕтерейми вăйă» çинчен калакан халлапа çĕмĕрсе тăкатпăрах.

Фашистла çăран салтакĕсем çакна лайăх кураççĕ: вăрçă ытларах та ытларах малалла тăсăлса пырать, гитлерла ултавçăсем пама пулнă мир вĕсенчен ытларах та ытларах инсоте тарса пырать. Юлашки икĕ çул хушшинче тунă çăмăл çĕнтерӳсем Германи валли мирлĕ пурнăçа çывхартса памарĕç. Вăрçă театрĕ мĕн тери ытларах çарăлса пырĕ, фашистла ушкăнăн вăйне те вăл çав таран нумайрах пĕтерсе пырĕ, фашизма çĕмĕрсе тăкничен вăрçă пĕтесси çине шанни калăхах пулнине Германи салтакĕсем çав таран хăвăртрах курса илĕç.

Пăшал айне тăратнă Германи халăхне мĕнле тăрантарса усрамаллине пĕлмен, Европăн пушă пӳлмисем умĕнче тăракан Гитлер хăйĕн вăйĕ ытлашши пулнипе, вăрçă пуçлать тесе ĕнентерме хăтланать. Сăмах та çук, унăн çарĕсем вăйлă, унăн генералĕсем, çăмăл çĕнтерӳсем туса, ывăнман-ха. Анчах та фашистла генералсем вăйсăр, хатĕрленмен çарсемпе мар, аслă совет халăхĕпе, хăйне мĕнле хӳтлемеллине пĕлекен аслă халăхпа тĕл пулчĕç.

Рабочисемпе колхозниксем, наука, техника, искусство работникĕсем, пĕтĕм совет çыннисем хăйсен творчествăллă мирĕшĕн пыракан вăйлă, пысăк кĕрешӳре ӳссе çитĕннĕ. Совет халăхĕн хăватлă вăйĕн пĕр тĕллеш патне пыракан пĕрлĕхлĕ çак линийĕ шурриссен тата ютçĕршыв оккупанчĕсен бандисене çĕмĕрсе тăкни патĕнчен сталинла аслă индустри туса хунипе колхозлă стройăн çĕнтерĕвĕ патне çитни тăсăлса выртать. Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсем чикĕри районсенчи халăхпа алла-алăн тытăнса, тăшмана хирĕç калама çук пысăк паттăрлăхпа çапăçаççĕ.

Хăратса пĕтернĕ çынсем çине мар, творчествăллă аслă ĕçĕн çирĕм тăватă çулĕ хушшинче пăхса ӳстернĕ богатырьсем çине, хăйсем **мĕне** хӳтлеминне пĕлекен, **мĕнпе** хӳтлемеллине йăхтах хатĕрленĕ богатырьсем çине тăпăнчĕ Гитлер. Июнĕн 23-мĕшĕнче погранични ксен пĕр взвочĕ икĕ шăн нимĕçĕн атакине сирсе янă взвод катартнă пек вĕçĕ-хĕррисĕр паттăрлăха ăста тата хăçан курнă пулĕ фашистсем? Çак взвод атакăна сирсе янă кăна мар, тата протизнико сисĕнмеллех пысăк çухатусем кӳнĕ. Полковник Сорокин пек чăтăмлăн тата пысăк ăсталăхпа çапăçнине хăçан тата ăста курнă пулĕ фашистсем? Унăн 9 самолечĕ çине фашистсен 15 самолечĕ пырса тапăнсан, вăл пысăкрах йышлă противнико хирĕç хăюллăн çапăçма пуçланă тата, хăйĕнне 4 самолет çухатса, тăшманăн 6 машинине персе антарнă. Хăйсен парашютистĕсене Европăра тӳрех пысăк хуласен площадĕсем çине пĕр чĕрмавсăр антарса хăварма хăнăхнă фашистсем диверсантла сволоча рыçăнти хресченсем тыта-тыта пĕтернине ăста тата хăçан курнă пулĕ вĕсем?

Ултавлă та усал тăшман пирĕн тăван çĕршыв çине вăрăлла килсе тапăнса, йăнăш турĕ. Çак йăнăш ăна халех ĕнтĕ хакла ларчĕ: тăшманăн 2500 танкран кая мар, 1500 самолета яхăн пĕтнĕ, 30 пин çын ытла тытăнса лекнĕ. Пирĕн таса чикĕсем çине вăрăлла тапăнса, гитлерла пуçкасакаллăсем çиçĕм пек хăвăрт килсе çалăпăр, пĕр эрне хушши срокра Киевпа Смоленска турттса илĕпĕр тесе шутланă. Ĕç тухмарĕ! Хăватлă Хĕрлĕ Çар мухтанчăх нимĕç войскисене шăлран тытларса ячĕ. «Нимĕç командованийĕ çиçĕмле хăвăрт çĕнтерме шутласа хуни арханса карĕ, Германи фрончĕсем пĕр-пĕринне çыхăнса кĕрешесси арканчĕ, нимĕç çарĕн наступленийĕ тăвас вăй-халĕ çĕмĕрĕлчĕ, совет войскисем вара, кĕрешӳ валли хăйсем каярах юсса сарăлса карĕç пулсан та, совет çĕрне хӳтлеççĕ, тăшмана хаяррăн пыра-пыра çапаççĕ, ăна халран ярса пыраççĕ».

Çакна вĕсем нихăçан та курман!

Пирĕн хуласем çине сывлăшран бомбăсем пăрахни çине ответлесе, совет авиацийĕ Германи территорийĕ çине аркатса тăкмаллах хăватлăн пыр-пыра çапнипе ответ парать.

Сывлăшри десантсем çине десантсемпе ответ паратпăр.

Юн çине юнпа ответ паратпăр.

Аркату çине — аркатупа.

Хамăрăн кашни пĕр пурнăçăн тăшманăн вуншар пурнăçне илетпĕр.

Тăшманшăн хĕрхенӳ пулмасть!

Цивилизацийлĕ пĕтĕм тĕнче кăмăлĕпе пулăшăвĕ — пирĕн енче. 1812 çулти вилĕмсĕр кунсенчи пекех, Наполеон çарĕсем пире вутпа та хĕçпе ютçĕршыв пусмăрĕ айне персе чикме кăлăхах хăтланнă чухнехи пекех, хальхи вăхăтра халăхăн хаяр çиллин вăйĕ çулăмланса хăпарать, ун чухнехинчен те хăватлăрах хăпарать.

Совет Союзĕ захватчиксене хирĕç хăйĕн хăватлă, ĕçе юратакан тата çине тăрса кĕрешекен, паттăррăн, хăюллăн, геройла çапăçма пĕлекен халăхăн пĕтĕм вăйне çĕклесе хăпартать. Пурнăçа çĕнĕ ăрусем, чухăн, çурма выçă, техника тĕлĕшĕнчен кая юлнă пулнă çĕршывран историллĕ питтех те кĕске срокра тĕнчери чи вăйлă государствăсенчен пĕри туса хума ĕлкĕрнĕ çĕнĕ ăрусем кĕчĕç.

Вăл совет çыннисен çак геройла ăрăвĕ, çĕнтерӳ мĕне пĕлтернине хăйĕн опычĕ тăрăх пĕлет. Вĕсене вăл пĕр хут çеç мар курнă. Вĕсене вăл çак вăрçăра та, фашистла пусмăрпа ирсĕрлĕхĕн пĕтĕм суртĕнчен чул çине чул хăварми çĕмĕрсе тăкма тивĕçлĕ çак вăрçăра та куратех.

(«ПРАВДА» умстатьи, июнĕн 30-мĕш).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Каçхи пĕлтерӳ

Июнĕн 28-мĕшĕнче пирĕн çĕнĕ позицисем çине куçакан войскăсем арьергардлă вăйлă çапăçусем туса пынă, противника пысăк поражени кӳнĕ.

Шауляй енчи çапăçусенче пирĕн войскăсем нумай çынна тыткăна илнĕ, тыткăна лекнисенчен нумайĕшĕ ӳсĕр пулнă.

Минск енче Хĕрлĕ Çар войскисем противник танкĕсене хирĕç ăнăçлăн кĕрешеççĕ, вĕсене хĕвелтухăç еннелле малалла кайма çарса тăраççĕ.

Тĕплĕн палăртнă даннăйсем тăрăх, июнĕн 27-мĕшĕнче çак енчи çапăçусенче противникăн 39-мĕш танковăй корпусĕн танкĕсене 300 танка çити пĕтерсе тăкнă.

Луцк енче иртнĕ кун хушшинче танксен пысăк çапăçăвĕ сарăлса кайнă, çак çапăçусенче икĕ енчен пĕтĕмпе 4000 танксем кĕрешеççĕ. Танксен çапăçăвĕ малалла сарăлса пырать.

Львов районĕнче противнике хирĕç вăйлă çапăçусем пыраççĕ, çапăçусем пынă вăхăтра пирĕн войскăсем противнике чылаях пысăк пораженисем кӳреççĕ.

Пирĕн авиаци сывлăшра ăнăçлă çапăçнă тата, сывлăшран хăватлăн пыр-пыра çапса, хамăрăн çĕр çинчи войскăсене пулăшу панă. Тульча районĕ çине вĕçсе пырса тапăннă вăхăтра пирĕн авиаци противникăн **Дунай** юханшывĕ çинчи икĕ мониторне пĕтерсе тăкнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн войскăсем государство. чиккине хăйсен аллинче çирĕп тытса тăраççĕ.

* * *

Тăшманăн тачă стройпа вĕçсе пыракан çичĕ бомбардировщикĕ пирĕн чиккĕри хула патне çывхарса килнĕ. Вĕсене хирĕç совет истребителĕсем вĕçсе çĕкленнĕ. Кĕçĕн лейтенант Яковлев машини сасартăк аялалла чăмнă, унтан тăшман бомбардировщикĕсен стройĕ çине аялтан çурса кĕнĕ, вĕсене икĕ цая уйăрса янă. Пирĕн истребительсем хăвалакан нимĕç самолечĕсем, бомбăсене пăрахмасăрах, тарма пуçланă. Çак çапăçура тăшманăн икĕ самолетне персе антарнă.

* * *

Чикĕри Н-ски заставăна противникăн темиçе роти хупăрласа илнĕ. Пограничниксем, хĕçпăшалсенчен питтех те тĕл персе, противник вĕçĕмренех 5 хутчен пуçланă атакăна сирсе янă, унтан кĕçĕн лейтенант Колотов ертсе пынипе контратака пуçланă. Штыксемпе хăюллăн пырса çапнине тăшман чăтса тăрайман, Румыни территорийĕ çине каялла тарнă.

* * *

Красноармеец Герасимович Прут юханшывĕ урлă каçма хăтланакан нимĕç салтакĕсен пысăк группине курнă. Вăл пысăк йышлă противнике хирĕç çапăçу пуçланă, хăй персе тăракан позицине пысăк ăсталăхпа улăштарса пырса, противнике каялла хăваласа янă. Хăюллă красноармеец, питех те тĕл персе лектерсе, тăшманăн 15 салтакне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Тăван çĕршывшăн пыракан çапăçусенче Н-ски авиачăсри летчиксем пысăк хăюллăхпа ăсталăх кăтартаççĕ. Стрелок-радист Беловал юлташ, тăвата çĕртен аманнă пулсан та, çапăçуран тухман, тăшман истребителĕсене каялла хăваласа янă. Стрелок-радист Смирнов икĕ самолет персе антарнă, стрелок-радист Волков—пĕр самолет. Старший политрук Догадин, хăйĕн самолетне пысăк сиен пулнă пулсан та, ăна хамăрăн аэродром çине чĕперех илсе çитернĕ.

* * *

Каллола районĕнче финн салтакĕсен группи пирĕн чикĕ урлă каçнă та çапла пĕлтернĕ: «Эпир Хĕрлĕ Çар аллине парăнатпăр, мĕншĕн тесен эпир Совет Союзне хирĕç вăрçасшăн мар».

* * *

Вашук юлташ командир пулса тăракан стрелковăй отделени разведка тунă вăхăтра противникăн икĕ взвочĕпе тĕл пулнă. Пысăкрах йышлă противнике хирĕç çапăçу пуçланнă, çак çапăçура Вашук юлташпа унăн боецĕсем противнике каялла хăваласа янă, ăна пысăк çухатусем кӳнĕ. Аманнă красноармеецсем Орешеноко тата Горшков юлташсем çапăçу хирĕнчен пăрахса кайма килĕшмен.

* * *

Фронт патне снарядсем турттарса пыракан шофер Скидин машини çине нимĕç самолечĕ пырса пенĕ. Снарядсем тиенĕ прицепа вут хыпса илнĕ, снарядсем çурăлса каяс хăрушлăх тухса тăнă. Красноармеец Скидин, вилĕмрен хăраса тăмасăр, çулăма сӳнтернĕ, хаклă груза кирлĕ çĕре илсе çитернĕ.

* * *

Украинăпа Белоруссин хĕвеланăç облаçĕсенчи хресченсем вăрçă пуçланнăн пĕрремĕш кунтан тытăнсах хăйсем пысăк сыхăлăхлă пулнине кăтартаççĕ.

Н. ялĕ çывăхĕнче хресченсем иккĕлентерекен икĕ çынна тытса чарнă. Çак çынсем нимĕç диверсанчĕсен 50 çынлă бандин, çав ял таврашĕнче пытанса тăнă бандăн, разведчикĕсем пулнă. Парашютист-диверсантсене хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе ĕçлекен истребительнăй батальон тата тавăри ялсенчи хресченсем çав бандăна тыпрама пуçланă, вара вăрман чăтлăхĕнче диверсантсен пĕтĕм группине тыпраса тупнă. 32 диверсанта вĕлернĕ, ытти сене тыткăна илнĕ.

* * *

ССР Союзĕн Босфорпа Дарданеллы тĕлĕшпе нихăçан та пулман претенайĕсем çинчен Гитлер шухăшласа кăларнă суя элеке тăрă шыв çине хăларнă хыççăн, Германири радио сакăн пекех суя элек сарма пуçланă. Çав элек тăрăх, ССР Союзĕ Ирана тĕрлĕ майсемпе юнаса хăратнă имĕш. Германи пропагандин çак çĕнĕ провокацийĕ суя элек пулни çинчен ятарласа калама кирлех те мар. Иран çĕршывĕ тата Иран халăхĕ тĕлĕшпе ССР Союзĕ яланах туслă туйăмсем тытса пураннă тата халĕ те ун çине туслă кăмăлпа пăхать.

* * *

Июнĕн 25-мĕшĕнче Киев çывăхĕнче пикировка тăвакан «Юнкерс-88» йышши бомбардировщик çинче нимĕçсен 4 летчикĕ анса ларнă: унтер-офицер Вăтаçĕр Силезири Бреславль хулинче çуралнă Ганс Герман; летчик-наблюдатель, Майна çинчи Франкфуртра çуралнă Ганс Кратц; старший ефрейтор Брно-Моравия хулинче çуралнă Адольф Аппель тата радист, Регенебург хулинче çуралнă Вильгельм Шмидт анса ларнă. Вĕсем пурте 54 мĕш эскадрильăн иккĕмĕш группин экипажĕ пулнă. Совет халăхне хирĕç çапăçас мар тесе, летчиксем малтан хăйсен бомбисене Днепр шывĕ çине пăрахнă, унтан хула çывăхĕнче анса ларнă, унта вĕсем вырăнти хресченсен аллине парăннă. Летчиксем «нимĕç летчикĕсемпе салтакĕсем патнех чĕнсе калани çынна, унта вĕсем çапла калаççĕ: «Тăвансем — летчиксемпе салтаксем, пирĕнтен пример илĕр. Пăрахăр çынвĕлерен Гитлера, кунта Россия енне куçса каçăр».

* * *

Юлашки вăхăтра Германи оккупацилĕнĕ çĕршывсенчи патриотсем пусмăрçăсене хирĕç пыракан хăйсен кĕрешĕвне нумай вăйлатнă. Çапла, сăмахран, июнĕн 26-мĕшпе 27-мĕшĕнче Голландире нимĕçсен çар склачĕсенче çĕнĕ взрывсем пулнă. Çавăн пекех Грецире те грек патриочĕсен оккупантсене хирĕçле кĕрешĕвĕ вăйланса пыни палăрать. Пирейра взрыв пулнă, çав взрыв вăхăтĕнче темиçе вуншар нимĕç пĕтнĕ. Нимĕçсем пусмăрласа илнĕ çĕршывсенчи халăхăн оккупантсене хирĕç пыракан çак кĕрешĕвĕ Германи фашизмĕ арканса каяс вăхăта çывхартать.

* * *

Германи оккупанчĕсем Югослави халăхне хирĕç юнлă та хаяр террор сарса янă пулсан та, çĕршывра нимĕçсене хирĕç кĕрешӳ пырать. Çĕршывра, сăртлă-туллă районсенче, хĕçпăшалланнă нумай отрядсем пур, вĕсем нимĕçсене хирĕç партизанла вăрçă сарса янă. Хресченсем çак отрядсене пулăшу параççĕ, вĕсем валли продовольстви парасçĕ. Çак партизанла вăрçăра сербсем пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ.

Кăнтăрлахи пĕлтерӳ

Минск тата **Слуцк** енче пирĕн войскăсем противникăн малти эшелонĕн танковăй частĕсен наступленине чарса лартнă. Противникăн танковăй частĕсене пысăк çухатусем кӳреççĕ.

Минск тата **Барановичи** енĕсенче противникăн пехотăллă соединенийĕсене хирĕç хаяр çапăçусем пыраççĕ, вĕсем танксен малти эшелонĕне пĕрлешме тăрăшаççĕ.

Çак енсенче противнике хирĕç вăйлăн кĕрешсе тата контратакăсем туса, пирĕн войскăсем противникăн тĕп вăйĕсене малалла кайма чарса тăраççĕ, вĕсене пысăк поражени кӳреççĕ.

Луцк енче танксен пысăк çапăçăвĕсем пыраççĕ, çак çапăçусем пынă вăхăтра пирĕн авиаци противник танкĕсене нумай хутчен аркатса тăкмаллах вăйлăн пырса çапнă. Çапăçу результачĕсене тĕплĕн палăртаççĕ.

Совет Союзĕне Финлянди хушшинчи мĕнпур госграница тăрăх противник, артиллерирен персе тăрса, çĕр çинче çине тăрсах разведка тунă. Противник разведчикĕсем пирĕн территори çине килсе кĕме хăтланса тунă мĕнпур ĕçсене сирсе янă.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн войскăсем государство чиккине хăйсен аллинче çавăрса илнĕ. Çакă вăл ирхине ирех пулнă. Каçхине 4 сехетре ял патне кавалери полкĕ пырса çитнĕ. Яла пырса кĕмелли вырăнта çапăçу пуçланнă. Хирĕç тăракан противнике пăшывсенчи халăхăн оккупантсене хирĕç пыракан çак кĕрешĕвĕ Германи фашизмĕ арканса каяс вăхăта çывхартать.

* * *

Германи оккупанчĕсем Югослави халăхне хирĕç юнлă та хаяр террор сарса янă пулсан та, çĕршывра нимĕçсене хирĕç кĕрешӳ пырать. Çĕршывра, сăртлă-туллă районсенче, хĕçпăшалланнă нумай отрядсем пур, вĕсем нимĕçсене хирĕç партизанла вăрçă сарса янă. Хресченсем çак отрядсене пулăшу параççĕ, вĕсем валли продовольстви парасçĕ. Çак партизанла вăрçăра сербсем пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ.

* * *

Кĕçĕн сержант Бельский тата **красноармеец Иванов** фашистсен полкĕ вырнаçса тăракан вырăна разведка тума кайнă пулнă. Вĕсене офицер ертсе пыракан тăшмансен икĕ взвочĕ хупăрласа илнĕ. Хăюллă разведчиксем çухалса кайман. Тĕл персе лектерсе офицера тата темиçе салтака персе ӳкернĕ хыççăн, разведчиксем тăшмансен кăшăлне татса каçнă, вăрмана кĕрсе пытаннă. Тепĕр сехетрен вĕсем штаба тăшман ăста вырнаçса тăни çинчен тата унăн хисепĕ çинчен калакан даннăйсем илсе пынă.

* * *

Нимĕçсен 54-мĕш эскадрильин пĕрремĕш группинчи пĕрремĕш звенори «Ю-88» самолет пирĕн енне вĕçсе каçнă. Çак самолетăн бортмеханикĕ ефрейтор Пауль Гофбауер нимĕç çарĕн Гитлер улталанă летчикĕсемпе салтакĕсене хăй чĕнсе каланинче çапла пĕлтерет: «Тăвансем! Штыксене Гитлерпа фашизма хирĕç çавăрăр. Совет Российĕ енне куçса каçăр. Халĕ эпĕ — Советлă Российăра. Эпĕ çакна куратăп: кунта тыткăна лекнĕ нимĕçсене лайăх, гуманно, этемле йыпăнаççĕ. Летчиксем! Вырăссен мирлĕ хулисем çине бомбăсем ан пăрахăр. Хăвăрăн самолетсем çинче Советлă Российăна вĕсене каçăр, культурăлла мĕнпур сыпăсемпе пĕрле юнлă фашизма пĕтерсе тăкма пулăшăр».

* * *

Тыткăна лекнĕ нумай нимĕç салтакĕсем допроссем вăхăтĕнче çапла каласа параççĕ: вĕсене Франции оккупацилĕнĕ облаçĕсенче вырнаçса тăракан гарнизонсенчен илсе тухнă, хăйсене ăста яни çинчен каламасăрах поездсем çине лартнă. Красноармеецсене тĕл пулсан кăна вĕсем Российăна хирĕç вăрçă пуçланнине ăнланса илнĕ. Вăрçăра тыткăна лекнĕ çынсем çапла пĕлтереççĕ: çапăçăва вĕсене хыçалтан пулеметсенчен перессипе хăратса хăваласа кĕртнĕ.

* * *

Голландире совет халăхĕ майлă шухăш-кăмăл, унăн Германи фашизмне хирĕç пыракан отечественнăй вăрçине пулăшас кăмăл кунран кун ӳссе пырать. Нумай голландецсем çапла каласаççĕ: «вырăссем монголсен аслă нашествине парăнмасăр тӳссе ирттернĕ; вырăссем аслă завоевателе, Швеци корольне — XII-мĕш Карл короле çĕмĕрсе тăкнă; вĕсем Наполеона хăваласа янă. Вырăс халăхĕ, хăйĕн ăланки вăйăпе тата хăюллă паттăрлăхĕпе кĕрешсе, кирлĕ мĕнле захватчиксене те пĕтерсе тăкать».

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

А. И. Лихачев юлташа Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси çинчен

Алексей Ильич **Лихачев** юлташа Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн
Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн
Секретарĕшĕн —
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн
Председатель заместителĕ А. КРАСНОВ.

Шупашкар хули,
1941 çулти июнĕн 30-мĕш.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Каçхи пĕлтерӳ

Июнĕн 29-мĕшĕнче финсемпе немĕçсен войскисем Баренцов тинĕсĕ патĕнчен Финский залив таран тăсăлса выртакан пĕтĕм фронт тăрăх наступленине тума пуçланă, пирĕн государство чиккин линийĕ тăрăх туса тухнă укрепленисене çĕмĕрсе каçма тăрăшнă. Финсемпе немĕçсен войскисем пĕр хут çеç мар пуçланă атакăсене пирĕн войскăсем, вăрăмах Луцк енчи войскăсене пулăшса пынă.

Империализмлă иккĕмĕш вăрçăн пĕтĕм тапхăрĕнче çăмăл çĕнтерӳсем тума хăнăхнă Гитлер тата унăн генералĕсем радио тăрăх çапла пĕлтереççĕ: вăрçă пуçланнăранпа çичĕ кун хушшинче вĕсем Совет Союзĕн 2 пин ытларах танкне, 600 орудине туртса илнĕ е пĕтерсе тăкнă пулать, совет самолечĕсене 4 пин самолет пĕтерсе тăкнă тата 40 пин ытла красноармееца тыткăна илнĕ пулать, çакăнпа пĕрлех çав тапхăр хушшинче немĕçсен пурĕ те 150 самолет кăна пĕтнĕ пулать, хăйсен миçе танк, мĕн чухлĕ оруди пĕтнĕ тата миçе çын тыткăна лекнĕ—çакăн çинчен Германири радио нимĕн те шарламасть.

Çапла ӳççăнах суеçтерни тата мухтанса сӳпĕлтетни тĕрĕс марри çинчен калама та аван мар пире.

Чăннипе илсен, положени йăлтах урăхла. Совет чиккинче немĕçсем 170 дивизи ытла пухса тăратнă, вăл шутра сахалтан та виççĕмĕш пайĕ—танковăй дивизисемпе моторизованнăй дивизисем. Совет Союзĕ хăйĕн войскисене чикĕсем патне пырса тăратманнипе усă курса, немĕçсем, вăрçă пуçласси çинчен пĕлтермесĕрех, пирĕн чикĕри чассем çине вăрăсем пек пырса тапăннă, вăрçăн пирвайхи кунĕсенче мухтанчăх немĕç войскисем пирĕн пограничниксене хирĕç, хăйсен аллинче танксем те, артиллери те пулман пограничниксене хирĕç çапăçнă. Вăрçăн пирвайхи кунĕн вĕçĕнче тата вăрçăн пĕтĕм иккĕмĕш кунĕнче пирĕн регулярнăй войскăсен малти часĕсем кăна çапăçусене хутшăнма пултарнă, пирĕн регулярнăй войскăсем вăрçăн виççĕмĕш кунĕнче, хăшпĕр вырăнта вăрçăн тăваттăмĕш кунĕнче кăна противникпе тĕл пулма ĕлкĕрнĕ. Шăпах çакна пула ĕнтĕ немĕçсем Белостока, Гроднона, Бреста, Вильнона, Каунаса йышăнса илме пултарнă.

Немĕçсем пирĕн войскăсене вырнаçтарас ĕçе темиçе кун хушшинче аркатса яма, çиçĕм пек хăвăрт килсе çапса пĕр эрне хушши срокра **Киевпа Смоленска** турттса илме тĕллев лартнă пулнă. Анчах та, событисенчен курăнать ĕнтĕ, немĕçсем хăйсен тĕллевне пурнăçа кĕртеймерĕç, пирĕн войскăсем кĕрешӳ валли вырнаçма пултарчĕç, **Киев, Смоленск** çине çиçĕм пек хăвăрт пырса çапас тени арканса кайрĕ.

7—8 кун хушшинчи вăйлă та хаяр çапăçусенче немĕçсен 2500 танкран кая мар пĕтнĕ, вĕсенне 1500 самолета яхăн пĕтернĕ, 30 пин çын ытла тыткăна лекнĕ. Çак тапхăр хушшинчех пирĕн çакăн чухлĕ çухату пулнă: 850 самолет, 900 çити танксем, пĕр хыпарсăр çухалнисемпе тыткăна лекнисем 15 пин çынна çитнĕ.

Малалли 4-мĕш страницăра

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çарпа Флот тата Совет Авиацийĕн хăюллă соколĕсем Тăван Çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртĕç, агрессора тĕппипех çапса çĕмĕрĕç!

☆ ★ ☆

Тăшман пире çĕнтереймĕ

Фашистла Германия вăрçă çинчен пĕлтермесĕр тата пĕр-пĕрне тапăнмалла марри çинчен тунă договора пăсса, пирĕн Совет çĕршывĕ çине варварла тапăнчĕ. Анчах урса кайнă фашистсем шутланă пек пулмарĕ, вĕсене пирĕн Хĕрлĕ Çар тивĕслипе кĕтсе илчĕ. Мухтавлă Хĕрлĕ Çар, нумай наципллĕ тата нумай миллионлă халăх Çарĕ, хăйĕн тăван çĕршывне тăшмансенчен сыхласа тăма яланах хатĕр тăнă. Нимĕн иккĕленмелли те çук, хальхи отечественнăй аслă вăрçăра та Хĕрлĕ Çар Германи фашизмне вĕлермеллех çапса хучĕ.

Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар вăйлă. Унăн çирĕп тыл пур тата пĕтĕм ĕçхалăхĕ ăна пулăшать. Пирĕн çĕршывăн пур кĕтесĕсенчен те тăван çĕршыва тăшмансенчен сыхлама добровольцесем пухăнаççĕ. Вĕсем, аслă та ирĕклĕ çĕршывăн хуçисем, паттăрăн та мухтавлăн малалла утаççĕ. Вĕсен куççулĕ çук, вĕсен пĕр ĕмĕт — тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкасси.

Вĕсем хăйсен посĕсене йĕркеллĕ хăварасçĕ, мĕншĕн тесен вĕсем заводсенчи станоксене, комбайнсене, машинăсене тыла юлнă тата тăван çĕршыва чĕререн парăннă смена йышăнасса лайăх пĕлсе тăрасçĕ. Вĕсем ĕç вăйра кăна мар, тата чăнлăхра пулнине аван пĕлеççĕ. Çавăнпа Ленин—Сталин партийĕ çитĕнтернĕ халăха, пирĕн Хĕрлĕ Çара — Донскойсен, Суворовсен, Кутузовсен, Чапаевсен, Котовскисен наследникне тăшман çĕнтерес çук.

Тăшман 1242 çулти Пăр-çинчи, 1410 çулти, 1760 çулти çапăçусен намăслă кунĕсене аса илтĕр, 1918 çулта Украинăран намăслăн тухса тарнине ан мантăр. Вырăс Çарĕн мухтанмаллисем пур! Халĕ тăван çĕршывăн пыракан отечественнăй аслă вăрçă, паллах юлашки тата гитлерла Германишĕн намăслă вăрçă пулĕ.

Берлин хулин уççийĕ Германин революциллĕ пролетариачĕн аллинче пулнă, вăл каллех тепĕр хут, ĕмĕрлĕхех унăн аллинче пулĕ.

Врач П. ОСИПОВ.

Хĕрлĕ Çара— тивĕçлĕ пулăшу

ЕЛЧĔК. Фашистсен урса кайнă йытăсем пирĕн аслă çĕршыв çине вăрçăпа килсе тухни «Марс» колхоз членĕсене тарăхтарать тата ылхантарать. Колхозниксемпе колхозницăсем пурте паян тесен паян, пĕр çын пек пулса, боецсемпе пĕр харăс тăрса, тăшмана çапса аркатма хатĕр. Çак кунсенче пулса иртнĕ митингра колхозниксемпе колхозницăсем çапла каларçĕ:

— Ирсĕр тăшман сĕмсĕр те хаяр, анчах, апла пулсан та, ăна колхозсен ылттăн уйхирĕсене таптама ирĕк парас çук. Эпир Хĕрлĕ Çара, тăван çĕршыв-аннемĕре колхоз производствинче хастарлă ĕçленипе, тырпулсене уйран чи кĕске срокра тата тăккаламасăр пуçтарса кĕнипе пулăшăпăр.

Халĕ колхозра хĕрӳллĕ ĕçсем пыраççĕ. Ĕçсĕр ларакансем çук, пĕрисем çулйĕрсене юсаççĕ, тепризем выльăхчĕрлĕхсене валли ăшă витесем тăваççĕ.

«Марс» колхоз уборкăна хатĕр. Жнейкăсемпе молотилкăсене тата ытти мĕнпур инвентарьсене юсаса çитернĕ.

— Кирлĕ пулсан, Сталин юлташ чĕнсен эпир ĕç хатĕрĕсене улăштарса, алла винтовка тытса тăшмана аркатса тăкма хатĕр,—теççĕ колхозниксем.

Колхоз тата колхозниксем государствăна аш-какай, сĕт-çу, çăмарта тăратас обязательствăсене кăçалхи çулпăн пĕтĕмпех тултарнă. Гимафетдинов тата Сабирзянов колхозниксем 1942 çулпăн та государствăна аш-какай парса татрĕç.

Ф. МАЙКОВ.

Эстони халăхĕ отечественнăй аслă вăрçа çĕкленсе тăрать

ТАЛЛИН, июнĕн 26-мĕш. (ТАСС). Республикăри предприятисенче, чугунçул транспортĕнче, учрежденисенче тата ялсенче—патриотла хăватлă çĕкленӳ. Советлă Эстонири ĕççыннисем, пĕтĕм Совет Союзĕнчи ĕççыннисем пекех, тăшман бандине пĕр шеллемесĕр çĕмĕрес, хăйсен пысăк тухăçлă ĕçĕпе паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшас кăмăлпа çунаççĕ. Пур çĕрте те производствăлла плансене ирттерсе тултараççĕ, кунне 1,5—2-шер норма паракан ĕççыннисен хисепĕ куллен-кун ӳссе пырать.

Балтийски мануфактура плана срокчен тултарнă. Ĕнер çурçул планĕнчен ирттерсе вăл çĕршыва çĕршер пин метр пиравăр, вуншар тонна çип панă.

Çак кунсенче пĕтĕм Эстони халăхĕ пĕр шухăшпа пурăнать:

— Фашистла налетчиксене çĕмĕрсе тăкар, тăван çĕршывăн чыслăхĕпе мухтавне хӳтлесе хăварар!

Митингсемпе хаçатсенчи выступленисенче, калаçусенче, çар комиссариачĕсене яракан заявленисенче Эстонири пиншер ĕççыннисем—социализмлă тăван çĕршывăн патриочĕсем çав шухăта каласа параççĕ.

Тăшмана халăх пĕрлĕхлĕ пулнипе кĕтсе илет

ЛЕНИНГРАД, июнĕн 26-мĕш. (ТАСС). Пысăк çурт стени патĕнче—хăйăр тултарнă ещĕк. Хваттерсенчи кантăксем çине хут сыпăçтарнă.

Çурма-подвалла пӳлĕмре — газоубежище. Унпа юнашар—медпункт. Пӳртре пурăнакансем пуртĕ—12 çула çитнисенчен пуçласа ваттисем таранах ПВХО нормисене панă. 1938 çултах çак çурта ПВХО значокĕ панă пулнă.

Харпăрăйне хӳтлес тĕлĕшпе ĕçлекен группа йăлтах хатĕр тăрать. ПВО штабĕнче — кунĕн-çĕрĕн дежурство. Мĕнпур звеносем—пушар, медицинăпа санитари, химизвенисем, социализмлă йĕркелĕхпе сыхăнăва хӳтлекен, аварисене пĕтерекен звеносем—пурте хăйсен вырăнĕсенче.

Тăшман кĕтмен çĕртен килсе тивеймĕ! Ленин хулинчи кашни çуртра пурăнакансем, Халтурин урамĕнчи 23-мĕш номерлĕ çуртри пекех, килсе тапăнма пултаракан тăшмана пĕр шикĕр, пĕтĕм хатĕрлĕхпе кĕтсе илеççĕ.

Халăх геройĕ çуралнă çĕршывра

СУСАНИНО (Ярославль облаçĕ). Упăшкисемпе тăванĕсене фронта ăсатса яракан колхозницăсем арçынсен вырăнне тăрса ĕçлеççĕ. Вуншар хĕрарăмсем трактористкăсем пулма хатĕрленеççĕ. Аслăрах классенче вĕренекен ачасем колхоз правленийĕнчен хăйсемпе утă, тĕштырă тата пахча-çимĕç пухса кĕртес ĕçре усă курма ыйтнă. Колхозниксем халăх геройĕн Иван Сусанинăн ятне чыслăн асра тытса усраççĕ, вĕсен районне Сусанин ятне панă. Вĕсем пурте пĕр кăмăллă пулса çапла каласçĕ: Тăван çĕршывшăн, унăн чыслăхĕпе мухтавĕшĕн эпир вăй-хала та, хамăрăн пурнăçа та шеллемĕпĕр!

Çирĕп дисциплинăшăн

СĔНТЕРВАРРИ. Новинскри катка-пичкесем тăвакан заводра производствăллă çĕкленӳ нихăçанхинчен те ытларах вăйлă. Германи фашизмĕ пирĕн юратнă социализмлă тăван çĕршыв çине тискеррĕн тапăннине хирĕç рабочисем нормăсене 2—3 хут ӳстерсе тултарнипе ответлеççĕ. Июнĕн 24-мĕшĕ тĕлне завод 1941 çулăн малтанхи çурçул планне ытлашшипех тултарчĕ. Уйрăм сменăсем июнĕн 24-мĕшĕнче планпа пăхнинчен пĕрре çурă ытларах продукци панă.

Уйрăм рабочисем ĕç тухăçлăхне ӳстерес ĕçре тĕлĕнмелле çитĕнӳсем тăваççĕ. Рабочи П. Соломонов юлташ июнĕн 23-мĕшĕнче нормăна 237 процент тултарнă пулсан, июнĕн 24-мĕшĕнче 324 процент тултарнă. Рабочи Ф. Осипов юлташ июнĕн 23-мĕшĕнче плана 235 процент, тепĕр кунне 301 процент тултарчĕ. Заводри стахановецсем В. Давыдов, А. Павлов, М. Бибиков, Е. Конов юлташсем кулленхи нормăна 160—190 процент таран тултарса ĕçлеççĕ

Н. ТИТОВ.

7—8 кун хушшинче хаяр çапăçусенче нимĕççенне 2500-тен кая мар танк, 1500 самолет пĕтерсе тăкнă, 30 пин çынна ытла тыткăна илнĕ... Нимĕçсен командованийĕ çиçĕм пек хăвăрт çĕнтерӳ тума ĕмĕтленни арканса кайрă, Германи фрончĕсем пĕрпĕринпе çыхăнса кĕрешесси пурнăçа кĕмĕрĕ, нимĕçсен çарĕн наступлени тăвас кăмăлĕ хавшанă. (Совет Информаци Бюровĕ пĕлтернинчен).

— Çĕнĕ çĕнтерӳ туни çинчен рапортлатăп: хĕрлисем ĕнер пирĕнне 60 самолет пĕрсе антарнăччĕ, паян 75 çеç.

ПЫСĂК ÇĔКЛЕНӲ

Колхозниксемпе колхозницăсем, служащисем, рабочисем тата интеллигенци хăйсен вырăнĕсенче тӳрĕ кăмăлпа, тăрăшса ĕçлеççĕ, ĕç тухăçлăхне пысăкран ӳстереççĕ. Вĕсем ĕçре примерлă пулса, нормăсене ирттерсе тултарса, хамăрăн хăватлă тата мухтавлă Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне пулăшаççĕ. Пирĕн ĕççыннисен пĕр шухăш, пĕр кăмăл—фашистла бандитсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкасси.

Колхозлă ялсенче, учрежденисемпе предприятисенче — пысăк çĕкленӳ. Капайчăк, юнлă Гитлера тата унăн фашистла шайкине советăн кашни гражданинĕ ылханать. Кашни колхозник, служащи, рабочи хăйĕн юратнă çĕршывне тăшманран сыхлама, уншăн хăйĕн пурнăçне пама та хатĕр тăрать.

«Кочаковец» колхоз членĕ 55 çулхи В. Никитин юлташ: «Манăн кĕçĕн ывăл Хĕрлĕ Çарта, халĕ тата аслă ывăл тăван çĕршыва сыхлама каять. Манăн пĕр сĕнӳ — тăшмана тĕппипех çапса аркатăр, кирлĕ пӳлсан хам та пыратăп», тесе каласа парать.

Колхозниксемпе колхозницăсем хăйсене Хĕрлĕ Çар ретне илме ыйтса заявленисем параççĕ. «Урожай» колхозран С. Миролюбова, «Трудовик» колхозран Л. Степанова колхозницăсем хăйсене Хĕрлĕ Çар ретне илме ыйтса заявленисем панă. Коммунистсемпе комсомолецсем хăйсене срокченех Хĕрлĕ Çар ретне йышăнма ыйтса заявленисем йышлăн параççĕ.

Фронта каякан арçынсем вырăнĕнче хĕрарăмсем ĕç тухăçлăхне ӳстерсе ĕçлеççĕ. Çак кунсенче Ф. Михайлова тракторпа ĕçлеме, О. Иосифова трактор-нăй бригадăн бригадирĕн помощникĕ пулса ĕçлеме тытăннă. Вĕсем малтанхи кунсенчех тракторпа ĕçлемелли нормăсене ытлашшипех тултарса ĕçлеççĕ.

«Пака тĕрĕ» артельте ĕçлекенсем те нормăна кунсеренех ирттерсе тултараççĕ. Егорова комсомолка нормăна кунсерен 130—140 процент, Анисимовăпа Галинова юлташсем 145-шер процент, Степанов тракторист 200—250 процент, Федоров тракторист 125—130 процент тултарса ĕçлеççĕ. Трактористка-коммунистка Е. Кудрявцева нормăпа 3,90 гектар сухалас вырăнне 8 гектар сухалать.

Колхозсем, колхозниксем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарма васкаççĕ. Шурккари «Победа» колхоз 1941 çулти поставка шучĕпе 100 пăт тĕштырă кайса панă. «11 лет Октября», «Стрела» колхозсем государствăна пама тĕштырăна аласа тасатаççĕ, сӳс-кантăр хатĕрлеççĕ. Лапсар ялсоветĕнчи колхозсем чĕк кун хушшинче государствăна 10 центнер, Клычево ялсоветĕнчи колхозсем 8 центнер какай панă. Туликово ялсоветĕнчи колхозсем те вĕсенчен юлмаççĕ. Чылай колхозсенче заем укçине, государствăна сĕт-çу, сӳс-кантăр срокчен парса татаççĕ.

С. МИРОНОВ.

ВКП(б) Шупашкар райкомĕн секретарĕ.

Пирĕн патриотсем

ШĂХАСАН. Германи фашисчĕсем пирĕн тăван çĕршыв çине ирсĕррĕн, вăрăхурахла тапăнни пĕтĕм совет халăхне çавтери тарăхтарса ячĕ.

Улаксарти Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕ П. Сорокин кăçал тин Хĕрлĕ Çар ретĕнчен тавăрăннă. Çарта вăл çар ĕçне тата политикăна яланах отлично вĕренсе пынă, командирсен приказне тӳррĕн, хăвăрт тата тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынă. Çавăнпăн ăна старшина тунă. Хĕрлĕ Çартан тавăрăнсан та Сорокин юлташ колхозра тăрăшса ĕçленĕ. Юлашки вăхăтра ăна Шăхасан райсовечĕн исполкомне ĕçлеме илнĕ пулнă. Урса кайнă, юнпăн антăхакан фашистла ирсĕр бандитсем пирĕн çĕршыв çине вăрăхурахла тапăннине пĕлсенех, П. Сорокин юлташ хăйне каллех çара илме ыйтса телеграмма ячĕ. Сорокин юлташ халĕ фронта тухса кайрĕ.

— Ман çине шанăр, юлташсем, эпĕ тăшмансене хирĕç мĕнпур вăя хурса, хамăн пурнăçа шеллемесĕр, çапăçăп. Тăшмана—вилĕм!—терĕ вăл тухса кайнă чух.

Ушанарти Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕ И. Казаков, СССР Совнарком Председателĕн Заместителĕ тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ радио тăрăх тухса каланине илтсенех, колхозниксем умĕнче çапла каларĕ:

— Эпĕ белофинсене хирĕç мĕнпур вăя хурса çапăçрăм. Мана виçĕ хутчен амантрĕç, çапах та эпĕ винтовкăна алран пăрахмарăм. Госпитальрен тухсан каллех эпĕ строя тăтăм, белофинсене сĕмĕртĕмĕр. Халĕ, Германи фашизмĕ пирĕн çĕршыв çине ирсĕррĕн тапăннине пĕлсенех, ман халех кайас килчĕ. Хамăран чеченсене пыракан çĕршыва, хамăран ирĕклĕ пурнăçа, хамăр телее эпир никама та памăпăр. Эпĕ хам ирĕкпе Фронта каятăп!

Шăхасанти вăтам шкулти военрук Соловьев юлташ та хăйне фронта ямă ыйтса заявлени панă. Ун пек заявленисем Шăхасан райвоенкоматне кашни кунах пыраççĕ.

С. СТЕПАНОВ.

Обязательствăсене срокчен малтан тултараççĕ

СОВЕТСКОЕ, июнĕн 27-мĕш. (**Телефон тăрăх**). Колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче государство умĕнчи обязательствăна срокчен малтан пурнăçлакансен хисепĕ хăвăрт ӳссе пырать. Хăшпĕр колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене тултарчĕç ге. 1941 çулпăн аш-какай обязательствисене районра пурĕ 15 колхоз тултарнă, çитес çулпăн та аванс шучĕпе чылай аш-какай панă. «Красное Сормово» колхоз аш-какай обязательствине 1941 çулпăн пĕтĕмпех парса татнă, 1942 çулпăн та 491 килограмм панă. Степан Разин ячĕпе тăракан колхоз та кăçалхи обязательствăна парса татса, çитес çулпăн та аванс шучĕпе панă. Васкасси ялсоветне кĕрекен Чапаев ячĕпе тăракан тата «Красная Армия», «Клевер» колхозсем те 1941 çулпăн аш-какай парса татнă.

Срокчен парса татнисем ытти парăмсем тăрăх та пур.

Районра 37 колхоз çăм парса татнă.

Халĕ колхозсенче 1941 çулпăн государствăна тырă парас ĕç анлăн сарăлса пырать. «За коммунизм» колхоз заготпункта иккĕмĕш кун ĕнтĕ тырă турттарать. Паян вĕсем 10 лав тырă илсе килчĕç. Киров ячĕпе тăракан колхоз 16 центнер ытла тырă панă.

А. ФИЛИППОВ.

Общественнăй пурлăха çирĕп сыхлассишĕн

Тăшмана çапса аркатма фронт кăна мар, тыл та çирĕп пулмалла. Рабочисемпе колхозниксен, служащисен хăйсен предприятийĕсемпе учрежденийĕсене çивĕччĕн сыхласа тăмалла.

Районри колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен колхозĕсенчи общественнăй пурлăхсене сыхлассине аван йĕркелерĕç. Уйрăмăнах «Ударник», «Первая борозда», «КИМ», «Комбайн», «Çĕнĕ çул» колхозсенче хуралсем йĕркеллĕ тăраççĕ. Кунта вуткăварпа кĕрешмелли инвентарьсем те юсавлă.

М. ИСАЕВ.

Патриотсен çырăвĕсем

(Хаçатсенчен)

Фашизма хирĕç пĕтĕм совет халăхĕ çĕкленсе тăчĕ, Германи фашизмĕ пирĕн тăван çĕршыв çине килсе тапăннине хирĕç 200 миллионлă совет халăхĕ пĕр çын пек пулса çапла ответлерĕ: «Пирĕн ĕç — тĕрĕс ĕç. Тăшмана çапса аркататпăр. Çĕнтерӳ пирĕнте пулĕ. Пĕтĕм вăя хурса ĕçлер, тăшмана çĕнтерме Хĕрлĕ Çар валли, Тинĕс-Çар Флочĕпе Авиаци валли мĕн хирлине пурне те туса парар!»

Халăх хăйĕн çарне пулăшать. Совет Союзĕнчи кашни ĕççыннăн çĕршыв умĕнче пĕтĕм ответлăха туйса ĕçлет. Хĕрарăмсем хăйсен упăшкисем вырăнне станоксем умне тăраççĕ, трактор рулĕсене тытаççĕ. Кашни патриот мĕн вăй çитнĕ таран Хĕрлĕ Çара пулăшма тăрăшать.

Пирĕн умра районри хаçатсен çак кунсенче тухнă çĕнĕ номерĕсем. Кашни хаçатрах совет патриочĕсен çулăмлă çырăвĕсене вулама пулать. Сăмахпа мар, ĕçпе ответлеççĕ вĕсем тăшманăн ирсĕр ĕçне хирĕç.

Манăн упăшка Хĕрлĕ Çарта, вăл тăван çĕршывăн тăшмана хирĕç çапăçать. Германи фашисчĕсем пирĕн тăван çĕршыв çине вăрăхурахла килсе тапăнни çинчен илтсенех, эпĕ упăшка вырăнне трактор çинче ĕçлеме сăмах патăм. Манăн упăшка стахановец пулнă. Эпĕ те стахановла ĕçлеме пулатăп, тесе çырать Ольга Иосифова Шупашкар районĕнчи «Ленин çулĕпе» хаçатра. Халь вăл МТС-ра трактор бригадин бригадир помощникĕ пулса ĕçлет.

Çĕршывăн патриоткисем хăйсене упăшкисемпе, пиччĕшĕсемпе тата тусĕсемпе пĕрле фронта ăсатма ыйтаççĕ, вĕсем те Хĕрлĕ Çар ретĕнче пуласшăн.

Калинински районри «Коммунизм ялавĕ» хаçат В. Яновская юлташ çырăвне пичетлесе кăларнă. Яновская юлташ çырать: «Тăван çĕршывăн чиккисене тăшмансенчен сыхлама фронта яма ыйтатăп. Мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн боецĕсен сывлăхĕпе пурнăçне сыхлас çĕрте санитари ĕçĕнче усă пама пултаратăп. Тăван çĕршывшăн хамăн пурнăçа шеллемесĕр çапăçма сăмах паратăп».

Рабочисем, колхозниксем тата интеллигенци тискер фашизма хирĕç ĕç фронтĕнче хăйсен вăй-халне тата снсĕмлĕхне ӳстернипе ответлеççĕ. Колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултараççĕ, государствăна тырă тăратаççĕ. Колхозниксемпе служащисем заем укçине срокчен тӳлесе татаççĕ.

Элĕкри вăтам шкулта ĕçлекен учительницăсем Петриковăпа Андреева юлташсем «Колхоз хаçатĕнче» çапла сыраççĕ:

— Урса кайнă фашистсем пирĕн юратнă тăван çĕршыв çине тискеррĕн килсе тапăнчĕç. Совет халăхĕ хăйĕн пĕтĕм вăйне Хĕрлĕ Çара пулăшас çĕре хурать. Эпир те хамăр çырăннă заем укçине пĕтĕмпех парса татрăмăр. Учительсене пурне те заем укçине срокчен тӳлесе татма чĕнетпĕр.

Тăван çĕршыв çине килсе тапăннă тăшмана пирĕн халăх пĕр хут çеç мар çĕнтернĕ. Халăх хăйĕн мухтавлă историне тата унăн геройĕсене асра тытать. Юлашки çулсем хушшинче пулса иртнĕ çапăçусенче çĕршер геройсем çуралчĕç. Мухтавлă Хĕрлĕ Çар белофинсене хирĕç паттăрăн çапăçнине, вĕсене çĕмĕрсе тăкнине совет халăхĕ ĕмĕрте манас çук. Вăл çапăçу урокĕсене ăсран тухса, урса кайнă фашистсем маннă пек пулчĕç пулсан, халĕ ĕнтĕ ăна вĕсем тепĕр хут аса илĕç. Фронта яма ыйтса заявленисем параканскен йышăнче белофинсене хирĕç пынă çапăçу участникĕсем те нумай.

Совет халăхĕ партипе правительство, юратнă Сталин таврa татах та тавăрах пĕтĕççе, отечественнăй вăрçа çĕкленчĕ. Вăл, пĕр çын пек пулса, тăшмана хаярăн çĕмĕрсе тăкĕ, пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен тăван çĕршывне тискер фашизмран сыхласа хăварĕ.

ХĔРЛĔ ÇАР РЕТНЕ ТĂМА ХАТĔР

ВĂРНАР, июнĕн 26-мĕш. (**Телефон тăрăх**). Районри рабочисемпе работницăсем, колхозниксемпе колхозницăсем тата ялти интеллигенци Гитлерăн тата унăн бандин ирсĕртен те ирсĕр ĕçне хирĕç тарăхса, татăклă ответ пама çĕкленчĕç. Пур çĕрте те ĕççыннисен митингĕсем пулса иртрĕç. Фашистла вăрăхурахсене хирĕç çапăçма, вĕсене ним юлмиччен çĕмĕрсе тăкма, отечественнăй аслă вăрçăра çĕнтерӳ тума районри ĕççыннисем хăйсен пĕтĕм вăй-халне парса ĕçлеççĕ, кирлĕ пулсан, партипе правительство чĕнсен, вĕсем пурте пĕр çын пек пулса, фронта тухса кайма хатĕр тăраççĕ. Халхи вăхăтра мобилизаци пырать. Вăл питĕ пысăк йĕркелĕхпе, политикăллă çĕкленӳпе тата организованно иртет. Темиçе çĕршер патриотсем хăйсене часрах фронта яма ыйтса заявленисем параççĕ.

Ылханлă фашизма — вилĕм!

Вăрнарти «Труд» артельте ĕçлекенсем — Семеновпа Серебров юлташсем хăйсен райвоенкомата панă заявленинче çапла сыраççĕ:

«Пире халех Хĕрлĕ Çар ретне кайма, ирсĕр тăшмана хăвăртрах çапса аркатмашкăн фронта тухса кайма ирĕк пама ыйтатпăр».

Пăрдасри колхоз членĕ, запасра тăракан командир А. Кириллов юлташ хăйне фронта яма ыйтать:

«Мана тăван çĕршывшăн, ирĕклĕхшĕн, чыслăхшăн паттăрăн çапăçма Хĕрлĕ Çар ретне ăсатма ыйтатăп: эпĕ пĕр тумлам юн юлмиччен тăшмана хирĕç çапăçма пулатăп. Эпир тăшмана çĕмĕрсе тăкатпăр. Çĕнтерӳ пирĕнте пулать. Çапăçура пире аслă çуллуç Сталин юлташ ертсе пырать»,—тет вăл хăйĕн заявленийĕнче.

Кĕçĕн Кибекри колхоз членĕ, запасра тăракан кĕçĕн командир, Финляндипи фронтĕнче белофинсене хирĕç хăюллăн çапăнă Антонов юлташ çапла калать:

— Эпĕ белофинсене хирĕç çапăçрăм. Вĕсене çĕмĕрсе тăкрăмăр. Халĕ ĕнтĕ тепĕр тăшман тапăнчĕ. Ылханлă фашизма, ылханлă Гитлер бандине—ылханлă вилĕм!

Мана Хĕрлĕ Çара—фронта хăвăртрах яр, эпĕ çапăçăва кĕме хатĕр».

Эпĕ сапер пулма пултаратăп

Хапăсри «Советская деревня» колхоз членĕ, 47 çулхи Леонтий Саснушкин юлташ хăйне Хĕрлĕ Çар ретне—фронта яма ыйтать. Вăл стахановец.

— Эпĕ плотник,—тет вăл.—Фронтра, саперсем ĕçленĕ çĕрте, усă кӳме пултаратăп. Паян тесен, паянах тăван çĕршывшăн çапăçма тухса каятăп.

«Советская деревня» колхоз членĕсем хăйсен паттăр ывăлĕсене—Воронцов, Шибилевский т. ыт. юлташсене фронта ăсатрĕç. Колхозниксем государствăна аш-какай, сĕт-çу памалли çулталăкри плана тултарчĕç. Халĕ колхозра хĕрӳллĕ ĕç пырать, колхозниксем вăйлăн ӳсекен тырпула пухса кĕме хатĕрленеççĕ.

Чапаев ячĕпе тăракан колхоз членĕ—Евдокия Птичкина юлташăн 3 ывăлĕ Хĕрлĕ Çар командирĕсем. Вĕсем—фронтра. Вăл хăйĕн ывăлĕсене тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçма ăнăçлăх сунать.

Хамăн упăшка вырăнне—хамах тăратăп

Вăрнарти МТС тракторисчĕсем Хĕрлĕ Çар ретне каяççĕ. Вĕсем хăйсен тракторĕсене хăйсен арăмĕсене шанса парса хăваraççĕ. Хĕрарăмсен патриотла туйăмĕ çавтери пысăк.

Тракторист С. Иванов юлташăн арăмĕ Мария Быкова юлташ çапла калать:

— Манăн упăшка тăван çĕршывшăн фронтра кĕрешет, эпĕ кунта—хамăрăн уйхирсенче кĕрешетĕп. Упăшка трактор çинче ĕçлеме тăратăп.

Тракторист Н. Васильев юлташ та хăйĕн тракторне ăрăмне—Екатерина Илларионова юлташа шанса парса хăварать. Кириллов юлташăн арăмĕ те трактор рульне хăйĕн аллине илет.

Хĕрарăмсем шофер пулма вĕренеççĕ

Чарклăри автоçул çинче ĕçлекен шоферсенчен чылайăшĕ хăйсен ирĕкĕпе фронта тухса кайрĕç. Фронта кайнă юлташсем вырăнне хĕрарăмсем ĕçлеме тытăнчĕç. Маслячкина, Лапташкина т. ыт. юлташсем пирвайхи кунах пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме пуçларĕç.

Çитес кунсенче Порфирьева, Евдокимова, Петрова тата темиçе вуншар хĕрарăмсем автомашина рульне алла илсе ĕçлеме пуçласçĕ. Хĕрарăмсене шофер ĕçне вĕрентме курс организацилеççĕ.

Районри ĕççыннисем пурте хăйсен вырăнĕнче. Вĕсем тухăçлăн ĕçлесе, дисциплинăна, общественнăй йĕркелĕхе, большевикла сыхăлăха çирĕплетсе тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетеççĕ, Хĕрлĕ Çара, унăн паттăр воинĕсене пулăшаççĕ.

Тăшман тапăнăвне хирĕç отечественнăй аслă вăрçа тухрăмăр. Эпир хамăрăн тăван çĕршывшăн, ирĕклĕхшĕн, чыслăхшăн кĕрешетпĕр. Пирĕн ĕç—тĕрĕс ĕç. Çĕнтерӳ пирĕнте пулать. Эпир пурсăмарта фронта тухса кайма хатĕр.

Евг. ЕНИ.

Пĕтĕмпех—çĕнтерӳ валли

УЛАТĂР, июнĕн 26-мĕш. (**Телефон тăрăх**). Пирĕн тăван çĕршывăн государство чиккисенче Хĕрлĕ Çар ултавлă та хаяр тăшмана хирĕç геройла хăюллăн, чыслăн та паттăрăн çапăçать. Пĕтĕм Совет халăхĕ хăйĕн тăван Хĕрлĕ Çарне чĕререн юратать, ăна пулăшассишĕн пĕтĕм вăй-халпа ĕçлет, унăн амăшĕ юратнă ачишĕн тăрăшнă пек тăрăшать.

Паровозсем юсакан завод коллективĕ пĕтĕм çĕршыври ĕççыннисемпе пĕрле, паянхи кун пĕр кăмăл-шухăшпа пурăнать: вăл кунĕн-çĕрĕн, ырми-канми Хĕрлĕ Çаршăн, Тăван çĕршывшăн пĕтĕм хастарлăхпа, пĕтĕм вăй-хала парса ĕçлет. Фронтпа тыла тимĕр пек çирĕп пĕрлĕх пĕтĕçтерсе тăрать. Пĕтĕмпех Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕ валли, пĕтĕмпех тăван çĕршыв валли ĕçлетпĕр.

Завод коллективĕн политикăллă тата производствăллă çĕкленĕвне кăтартса пама сăмах та çитес çук. Продукци ытларах та ытларах туса кăларас!—çакă вăл завод коллективĕнчи кашни çынăн пирвайхи ĕмĕчĕ, вăл уншăн кĕрешет, çавăншăн пĕтĕм чĕререн парăнса ĕçлет.

Шалаев юлташ смени виçĕмкунхи производствăллă программăна 174 процент, Куделькин юлташ смени 158 процент тултарчĕç. Стахановец Макшанов юлташ кулленех иккĕр-виçĕр норма тултарать. Тимĕрçĕ Шуйкин юлташ кунсерен виçĕ норма, строгальщик Канов юлташ икĕ норма çурă ытларах тултараççĕ. Бондажник Андреев юлташ нормăна 270 процент, токарь Коновалов юлташ 220 процент, Казаков юлташ 223 процент тултараççĕ.

Кун пек примерсен вĕçĕ çук. Завод коллективĕ çурçулти плана срокчен тултарса, тăван çĕршыв валли планран ирттерсе темиçе вуншар пин тенкĕлĕх продукци туса парассишĕн кĕрешет.

Тăшманăн темĕнле ирсĕр тапăнăвĕ те пире хăратас çук. Пирĕн халăх гранит пек çирĕп ретне пĕтĕссе тăрать. Эпир хăрушлăхсем умĕнче, хаяр çапăçусенче пĕр хутчен кăна мар пулнă. Çав çапăçусенче яланах эпир çĕнтернĕ. Отечественнăй аслă вăрçăра та, эпир çĕнтеретпĕр. Тăшмана вĕçне çитиех тата пĕр шеллемесĕр çĕмĕрсе тăкатпăр.

МАКАРОВ.

Партбюро секретарĕ.

„Хĕрлĕ Çара, Флота тата Авиацине мĕн кирлине пурне те тăратмашкăн, тăшмана çĕнтермешкĕн пирĕнтен кашниех хăйне тата ыттисене те чăн-чăн совет патриотне тивĕçлĕ пек дисциплинăллă, организациллĕ пулма тата хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр кĕрешме хушмалла“ *(Молотов).*

УДАРНЫЙ ТРУД – ОПЛОТ ОБОРОННОЙ МОЩИ СССР

Ударлă ĕç—СССР оборона хăвачĕн тĕрекĕ

В. КОРЕЦКИЙ художникăн фото-монтажĕ. («Искусство» издательстви кăларнă плакатран ӳкернĕ репродукци).

Мĕнпур çĕршывсенчи ученăйсене

Çак кунсенче, фашистла правительсен айăпĕпе çĕр этем юнĕн çĕнĕрен çĕнĕ юхамăсемпе хĕрелнĕ вăхăтра, СССР Наукăсен Академийĕ тĕнчери мĕнпур ученăйсене, наукăпа прогресăн мĕнпур тусĕсене çапла чĕнсе калать: этемлĕх культурине гитлерла варвăрсенчен хӳтлес ĕç валли мĕнпур вăйхала мобилизацилер.

Фашистла салтак атти пĕтĕм тĕнчери этемлĕхĕн çутине — этем шухăшĕн ирĕклĕхне, халăхăн хăйĕн культурине ирĕклĕн аталантарса пымалли правине таптаса лапчăтассипе хăратса тăни çине пирĕнтен — наука работникĕсенчен — кам та пулин канăçлăн пăхса тăма пултарать-и ĕнтĕ? Гитлеризма—пусмăрлă вăрçăсен вучахне çĕмĕрсе тăкиччен, пĕр çĕршыв та пулин хăйшĕн хăрушлăх çук тесе шутлама пултарать-и ĕнтĕ?

Фашизм —культурăпа наукăн чи хаяр тăшманĕ.

Фашизм вăл — вĕçĕ-хĕррисĕр вăрçă. Сакăр çул хушши ĕнтĕ Гитлерпа унăн ушкăнĕ Германине вĕçĕ-хĕррисĕр асап кăтартаççĕ. Этемлĕхе наукăпа искусствăн аслă генийĕсене панă çак çĕршывран мĕн туса хучĕç-ха вĕсем? Мĕн пулса тăчĕ-ха Германири ученăйсемпе? Е вĕсене пĕтерсе тăкнă, е вĕсем ют çĕрте асап курса çӳреççĕ. Мĕн пулса тăчĕ-ха Германири наукăпа? Ăна тĕпренех наукăна хирĕç пыракан, çынна курайман расистла аташусемпе —нимĕç раси суйласа илнĕ раса пулса тăрать, çакă вăл ăна тĕнчере пуçпулса тăма право парать, ытти мĕнпур халăхсенчен чурасем туса хума право парать текен аташусемпе улăштарчĕç.

Хăйсен çĕршывне пылчăкпа юн айне таптаса пăрахса, гитлеровецсем çур Европăна чуралăха персе чикрĕç, çаратса тустарчĕç, тата пĕтĕм тĕнчене хăратса тăраççĕ. Совет Союзĕнчи ученăйсем историре халиччен пулман чи ирсĕр режимăн пусмăрĕ айĕнче асапланакан нацисене пĕтĕм чĕререн кăмăллани çинчен каласа пĕлтереççĕ.

Халĕ Гитлер хăйĕн çĕнĕ ирсĕр те тискер ĕçне турĕ — пирĕн çĕршыв çине те тапăнчĕ. Пирĕн халăх вăрçă вăрçасшăн пулман. Вăл урăх çĕршывсемпе тунă договорсене çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пынă. Вăл нихăçан та ют çĕрсем çине алă çĕклемен тата халĕ те çĕклемест. Анчах та киревсĕррĕн тапăнни çине ответлесе, икçĕр миллионлă совет халăхĕ — хăйĕн правительстви тавра, И. В. Сталин тавра пĕрлешнĕ совет халăхĕ хăйĕн тăван çĕршывне, хăйĕн çĕрне хӳтлеме, демократиллĕ аслă çĕнтерӳсене хӳтлеме, тĕнче культурине хӳтлеме калама çук татăклăн та хăюллăн, тимĕр пек çирĕппĕн пĕтĕссе, хăватлă вăйпа çĕкленсе тăчĕ, асса кайнă тăшмансем çакăн пек хăватлă вăй пур тесе шухăшламан пулас, анчах та Совет Союзне пĕлокенсем çав вăй пирки нихăçан та иккĕленмен.

Çак татăклă кĕрешӳ фашизма пĕтерсе тăкать, ăна аркатса тăкать.

Совет ученăйĕсем, мĕнпур халăхпа йăлтах пĕр пулса, тăван çĕршывпа ирĕклĕхе хӳтлекенсен речĕсенче хăйсен выăнне йышăнаççĕ. Совет ученăйсем тата Совет интеллигенцийĕ юлашки 20 çул хушшинче пирĕн çĕршывра сарăлса кайнă культурăллă аслă строительствăна активлăн хутшăнса ĕçлерĕç. Кая юлнă, тĕттĕм патша Российĕнчи халăхсене культура патне çĕклесе хăпартас тесе, вĕсем хăйсен пĕтĕм вăйĕпе пĕлӳлĕхне пачĕç. Вĕсем хăйĕн халăхне Шекспир, Гете тата Пушкин, Бальзакпа Толстой, Бетховенпа Чайковский, Рембрандтпа Леонардо да Винчи çырнă аслă произведенисемпе паллашма пулăшрĕç. Хăйсен ĕçĕсенче вĕсем Ньютонăн, Дарвинăн, Гельмгольцăн, Пастерăн, Менделеевăн, Павловăн — мĕнпур нацисен шухăшĕн корифейĕсен традицийĕсене малалла аталантарса пычĕç. Совет халăхĕсен культури ӳссе чечекленнине вĕсем хаваслă та мăнаслă туйăмпа курса тăраççĕ. Авалхи вăхăтсенчен пуçласа пухăннă тата эпир хисеплекен культурăллă хаклăхсен никĕсĕ çинче Совет Союзĕнчи халăхсем хăйсен культурине кашниех хăйсен тăван чĕлхипе аталантарса ӳстерсе пыраççĕ.

Çак татăклă çапăçу сехетĕнче совет ученăйĕсем мĕнпур халăхпа, хăйсем халăхĕпе пĕрле пыраççĕ, хăйсен тăван çĕршывне хӳтлес ĕçшĕн, тĕнчери наукăн ирĕклĕхне хӳтлес ĕçшĕн, пĕтĕм этемлĕх службинче тăракан культурăна çăлса хăварас ĕçшĕн пыракан кĕрешӳре —вăрçă вучĕ чĕртекен фашистсене хирĕç пыракан кĕрешӳре хăйсен пĕтĕм вăй-халне параççĕ.

Вăтам ĕмĕрсем патне тавăрăнассине, тĕнче культурин ӳсĕмне чарса лартассине — урса кайнă фашизм тума тăрăшакан çак ĕçсене сирсе ярас тесе, этемлĕхĕн малашлăхĕшĕн тăрăшакан, малта пыракан мĕнпур çынсем хăйсен вăйĕсене пĕрлештерни кирлĕ.

Камăн пиншер çулсен культурăллă наследийĕ хаклă, камăн наукăпа гуманизмăн чаплă идеалĕсем хаклă, савсем, асса кайнă хăрушă тăшмана пĕтерсе тăкас тесе, хăйсен пĕтĕм вăй-халне хурса тăрăшма тивĕçлĕ.

Академиксем: В. Л. КОМАРОВ, А. Н. БАХ, А. А. БОГОМОЛЕЦ, Н. Н. БУРДЕНКО, Е. С. ВАРГА, В. И. ВЕРНАДСКИЙ, И. М. ВИНОГРАДОВ, А. Я. ВЫШИНСКИЙ, Н. Ф. ГАМАЛЕЯ, А. М. ДЕБОРИН, Н. Д. ЗЕЛИНСКИЙ, М. А. ИЛЬИНСКИЙ, А. Ф. ИОФФЕ, П. Л. КАПИЦА, Б. А. КЕЛЛЕР, А. Н. КОЛМОГОРОВ, А. Н. КРЫЛОВ, Т. Д. ЛЫСЕНКО, И. И. МЕЩАНИНОВ, М. Б. МИТИН, Н. И. МУСХЕЛИШВИЛИ, В. П. НИКИТИН, В. Н. ОБРАЗЦОВ, В. А. ОБРУЧЕВ, И. А. ОРБЕЛИ, Л. А. ОРБЕЛИ, Д. Н. ПРЯНИШНИКОВ, Н. Н. СЕМЕНОВ, П. И. СТЕПАНОВ, Е. В. ТАРЛЕ, А. Н. ТОЛСТОЙ, А. Е. ФАВОРСКИЙ, А. Е. ФЕРСМАН, А. Н. ФРУМКИН, С. А. ЧАПЛЫГИН, Е. А. ЧУДАКОВ, И. И. ШМАЛЬГАУЗЕН, О. Ю. ШМИДТ, М. А. ШОЛОХОВ, Л. С. ШТЕРН, Ф. И. ЩЕРБАТСКОЙ, ЕМ. ЯРОСЛАВСКИЙ.

Хăватлă тыл

КАНАШ. Фашистла Германия пирĕн таса çĕр çине вăрçăпа тапăнса кĕни çинчен пĕлсен вагонсем юсакан заводăн пур цехĕсенче те хăватлă митингсем пулса иртрĕç. Митингсенче тухса калакан рабочисемпе работницăсем, служащисем, инженерсемпе техниксем урса кайнă фашизма çапса аркатас ĕçре хамăран мухтавлă Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшма, çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçлесе, ытларах та ытларах продукци туса кăларма, партипе правительство паракан кирек мĕнле заданине те чи кĕске срокра тултарма, çĕршыв обороншне тĕреклетме, партин Центральный Комитечĕ тавра, хамăран Совет правительстви тата юратнă çулпуç Сталин юлташ тавра нихăçанхинчен те тачăрах пĕтĕсме тупа тăваççĕ.

Токарь М. С. Сергеев çапла калать:

— Тăшман пĕрре çапни çине виçĕ хут вăйлăрах çапнипе ответлер, ăна пуçĕпе пĕтерсе тăкар! Производствăра ĕç тухăçлăхне виçĕ хут ӳстерер!

Сергеев юлташ хăйĕн обязательствине ăнăçлăн пурнăçа кĕртет. Июнĕн 25-мĕшĕнче вăл сменăри нормăна 207 проц., Ивановпа Совгин токарьсем 130—150 проц. тултарчĕç.

Сталинла призыв ударникĕ тимрĕç Г. В. Фомин июнĕн 24-мĕшĕнче сменăри нормăна 182 процент тултарчĕ. Комсомолец строгальщик Павлов 278 процент, электросварщик орденоносец Цапин 200 процент тултарса ĕçлеççĕ. Орденоносец Кукляев смени июнĕн 25-мĕшĕнче пĕр кунхи заданине 250 процент тултарчĕ.

Крановщица Ольга Герасимова Лунин меточĕпе ĕçлет. Вăл пушă вăхăтра Кубишива станочницăна хăйĕн цехĕнче крансем çинче ĕçлеме вĕрентет.

Стахановецсем, коммунистсемпе комсомолецсем, беспартийнăйсем, пĕтĕмпе 60 çын ытла, хăйсене фронта хăвăртрах яма ыйтса заявлени панă.

* * *

Германи фашизмĕн тискер ĕçĕ районри колхозлă хресченсене вĕçĕ-хĕрисĕр тарăхтарса ячĕ. Вăрçă провокаторĕсене ответлесе, колхозниксем ĕç тухăçлăхне темиçе хут ӳстереççĕ. Колхозсем 1941 çулшăн государствăна срокчен тырă пама тытăнчĕç. Доронин ячĕпе тăракан колхоз 96 центнер, Сталин ячĕпе тăракан колхоз—49 центнер, Чкалов ячĕпе тăракан колхоз—70 центнер, Киров ячĕпе тăракан колхоз—43 центнер тырă пачĕç те ĕнтĕ. Районра пĕтĕмпе икĕ кун хушшинче государствăна 900 центнер ытла тырă, 100 центнер аш-какай панă.

В. М. Молотов юлташ радио тăрăх тухса каланă сăмаха итленĕ хыççăнах, колхозниксем хăйсен тăван çĕршывне чунтан-чĕререн юратнине ĕçпе çирĕплетме пуçларĕç. Асхвари «Хĕрлĕ хĕм» колхоз колхозникĕсем Миронов, Гордеев, Максимов т. ыт. те çĕнĕ заем ухçине 100 проценчĕпех тӳлесе татрĕç. Колхозниксем О. Максимова, И. Михайлов, Ф. Ермолаева июнĕн 23-мĕшĕнчех кăçалхи çулшăн аш-какай парса татрĕç.

Колхозра производствăллă пысăк çĕкленӳ. 71 гектар çинче çум çумланă, уборкăна хатĕрленсе 3 жнейка, 2 лобогрейка юсанă. Зерносушилка туса пĕтереççĕ. Чугунçул транспортне социализмлă пулăшу парас тĕлĕшпе кунсерен 44 çын ĕçлеççĕ. Вĕсем уборкăччен транспортра ĕçлеме пуласçĕ. Çак кунсенче колхоз 164 кубометр вăрман хатĕрленĕ. Хальхи вăхăтра вăрманта лашапа 12 çын, çуран 40 çын ĕçлеççĕ.

Киров ячĕпе тăракан колхоз та уборкăна хĕрӳллĕн хатĕрленет. 55 çулхи колхозник Афанасий Захаров хăйне доброволец йĕркипе Хĕрлĕ Çара илме ыйтса заявлени панă. Унăн икĕ ывăлĕ Хĕрлĕ Çар ретĕнче.

— Ывăлăмсемпе пĕрле пулса, Гитлер пуçне касса татас килет. Çавăнпа мана çара яма ыйтатăп,—тесе çырать вăл хăйĕн заявленийĕнче.

МАЛОВ.
НИКОЛАЕВ.

Государствăна тырă, аш-какай паратпăр

ШАХАСАН. Германи фашизмĕ пирĕн çĕршыв çине бандитла тапăннине хирĕçлесе пулнă митингсенче колхозниксем хамăран юратнă тăван çĕршыва сыхлама, Хĕрлĕ Çарпа Флота тата Авиацине çак отечественнăй вăрçăра историллĕ пысăк задачăсене чыслăн пурнăçламашкăн мĕн кирлине пурне те туса пама пулчĕç.

Фашистла вăрă-хурахсем пирĕн юратнă тăван çĕршыв çине пĕр сăлтавсăр тапăннине хирĕç ответлесе, хирти тырпулсене пухса кĕртме большевикла хатĕрленме, вĕсене пĕр тăкаксăр пухса кĕртме, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçлама, çак отечественнăй вăрçăра тăшмана çапса салатса татăклă çĕнтерӳ тума Хĕрлĕ Çара колхозла пулăшу пама обязательство илетпĕр, —теççĕ колхозниксем хăйсен резолюцийĕсенче.

Колхозниксем хăйсен сăмахĕсене ĕçре пурнăçлаççĕ.

Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз государствăна 120 центнер, Шуркассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 70 центнер тырă панă. «Ударник» колхоз государствăна 40 центнер тырă, 14 центнер какай панă. Малта пыракан колхозсен примерĕ тăрăх «Борец», Ушнартри Калинин ячĕпе тăракан, Имелевăри Доронин ячĕпе тăракан т. ыт. колхозсем те кăçалхи обязательство шучĕпе государствăна тырă параççĕ.

А. СОЛОВЬЕВ.

Колхозсем хăйсен обязательствисене срокчен тултараççĕ

СОВЕТСКОЕ. «Красное Сормово» колхоз 1941 çулшăн аш-какай парса татса, ситес çулшăн виçĕ центнер пачĕ. Районри чылай колхозсем кăçалхи çулшăн государствăна тĕштырă пама тытăнчĕç. Турай ялсоветне кĕрекен Киров ячĕпе тăракан колхоз 26 центнер, Липовка колхозĕ 10 центнер тĕштырă пачĕç.

Районри колхозсем уйри тырпула кĕске срокра, тăккаламасăр пуçтарса кĕме хатĕрленеççĕ.

П. НИКИТИН.

БОЕВОЙ ЭПИЗОДСЕМ

Отечественнăй вăрçăн геройĕсем

Жаринов хăйĕн звенипе пĕрле задание пурнăçа кĕртме тухса кайнă. Унăн виçĕ летчик-истребителĕ тĕлĕнмелле хăвăрт, вĕçекен машинăсемпе вĕçсе пынă. Звено аялтан вĕçнĕ: çакăн пек вĕçнĕ чухне хăвăрт вĕçекен машинăна пулеметсенчен е зениткăран персе лектерме йывăр. Кунсăр пуçне, çакăн çӳллĕшĕнче вĕçсе пынă вăхăтра аялалла хăвăртланма, заданине хăвăртрах пурнăçа кĕртме — аэродромри материальнăй чаçе çĕмĕрсе тăкма, тăшман самолечĕсемпе ангарĕсене хăвăртрах вут хыптарса яма пулать.

Тепĕр кунне Жаринов вĕçсе çĕкленнĕ аэродром çине икĕ бомбардировщик пырса тапăннă.

Çакă вăл ирхине 4 сехет тĕлнелле пулнă. Бомбардировщиксем аялтан вĕçсе пырса бомбăсем пăрахнă. Сывлăшалла çулăмпа тĕтĕмĕн çăра юписем тапса çĕкленнĕ. Анчах сооруженисем çине те, самолетсем çине те пĕр бомба та пырса лекмен.

Çавăнтах пирĕн виçĕ истребитель пĕлĕтелле вĕçсе çĕкленнĕ. Вĕсем налетчиксене хăваласа кайнă. Пĕр тăшманĕ тарса хăтăлнă. Ун выраннe тепĕр бомбардировщикне лейтенант Оборин хăваласа çитнĕ. Вăл чи лайăх положени йышăннă та аллипе чашетка çине пуснă. Пĕр черет персе янă хыçăн пулеметсем темшĕн лăпланнă. Механизмсенче темĕнле кăлтăк тухса тăнă. Летчик тарăхнипе хăйĕн тутисене çыртса пынă. Тăшмана хăваласа çитес, ун çине пулеметсене тĕллес те — алăран вĕçертес-и вара? Нихăçан та! Вара Оборин пĕр саманта хушшинчех хăюллă решени йышăннă. Хĕçпăшалĕр, пеме чарăннă пулеметсомпе вăл тăшманăн йывăр, лайăх хĕçпăшалланнă машини çине тапăннă. Ун çине пулеметсенчен пенĕ, анчах та вăл чарăнса тăман. Бомбардировщик çумнех вĕçсе пырса, вăл унăн плоскоçне винтпа кастарнă. Оборин машинине хăрушла вăйлăн чĕтретсе илнĕ. Тăшман çине пăхса тăмасăр, вăл айккинелле пăрăннă, кирлĕ пулсан, истребитель çĕмĕрĕлнĕ пулсан тесе, парашютпа сикме хатĕрленнĕ. Анчах та машина çĕмĕрĕлмен пулнă. Шанчăклă истребитель çак питех те пысăк нагрузкăна чăтса иртternĕ, калама çук пысăк испытанирен чыслăн çĕнтерсе тухнă. Бомбардировщикĕ мĕн пулнă? Унăн касса татнă çуначĕ персе аннă, хăй вăл ешĕл садсемпе витĕнсе тăракан çĕр çине анса тăрăннă.

Оборин хăйĕн базине чиперех тавăрăннă. Вăл анса ларсан, унăн машини патне юлташсем чупса пухăннă. Фюзеляжра шăтăксем, винт пăсăлнă пулнă. Темиçе сехет ĕçлесен шăтăксене питĕрсе лартнă, винта уläштарнă.

Старший лейтенант Оборин, отечественнăй вăрçăн геройĕ, тăван çĕршыв мухтавĕшĕн çĕнĕ паттăр ĕçсем тума, çĕнĕ çапăçусене хĕме хатĕр тăрать.

Э. ВИЛЕНСКИЙ, С. ГАЛЫШЕВ.
«Известия» хаçатăн ятарласа кайнă корреспонденчĕсем.

Действующи арми.

(«Известия», июнĕн 27-мĕш.).

Совет артиллерисчĕсен тăшмана çĕмĕрекен вут-çулăмĕ

Ирхине ирех боевой тревога панипе противотанковăй артиллери дивизионĕн икĕ батарейĕ чикĕ патнелле тухса кайнă. Чикĕ патĕнчен 23 километрта тăракан М. хулана хӳтлеме пĕр пирĕн подразделени кăна юлчĕ. Подразделени составĕнче—ултă оруди тата вĕсемпе ĕçлекен 21 çын.

Кăнтăрла икĕ сехетре противник енчен пулеметран пенĕ сасăсем илтĕнчĕç, часах тăшман артиллерийĕ те кĕрлеме пуçларĕ. Вĕсем пеме пуçласанах эпир пире хирĕç пысăк калибрлă 15 оруди персе тăнине палăртрăмăр.

Тăшман çине чи пуçласа батарея командирĕ хăй—старший лейтенант Малык юлташ персе ячĕ. Унпа юнашар наводчик лейтенант Васильев тăчĕ. Хăйпе пĕрле 10 боец илсе, лейтенант Светлов боеприпассен склачĕсене хӳтлеме тухса кайрĕ.

Противник батарея çине вĕçĕмренех 8 сехет хушши хаярăн персе тăчĕ. Тăшман совет артиллерисчĕсене хăйсен позицийĕсем çинчен хĕссе кăларма тăрăшрĕ, анчах ăна вăл тăваймарĕ. Пирĕн пĕтĕм 6 оруди пĕр кăлтăксăр ĕçлерĕç, асса кайнă фашистсен пуçĕсем çине центнерĕ центнерĕпе металл тăкса тăчĕç. Çапăçу вăхăтĕнче пирĕн батарея питех те тĕл тата вăйлăн персе лектерсе, противникăн 6 орудийĕне пĕр броневикне стройран кăларчĕ. Оруди командирĕ старший сержант Смирнов юлташ тăшманăн пĕр туппине хăй персе лектерсе çĕмĕрчĕ.

Пирвайхи çапăçурах пирĕн батарейăн пĕтĕм личнăй составĕ хăйĕн ĕçне питех те лайăх пĕлсе ĕçлерĕ, хăй питех те çирĕп дисциплинăллă пулнине, вĕçĕ-хĕррисĕр хăюллă пулнине, хăйĕн аслă тăван çĕршывне пĕтĕм чĕререн парăннине кăтартса пачĕ.

Çапăçу пуçланнă хыççăн темиçе сехет иртсен старший сержант Гомзяков юлташа икĕ уринчен те амантрĕç. Сураннe савăнтах тирпейлесе сыхса, вăл перевязка пунктне кайма килĕшмерĕ, хăйĕн орудийĕ патĕнче каç пуличченех ĕçлерĕ.

Трактор водителĕ Черебухин юлташ хăйĕн машини валли горючи илме кайнă, батарея патĕнчен 300 метрта ăна амантнă. Наводчик Протасов тăшман пульлисем шăхăрса тăракан вырăнтан хырăмпа шуса иртсе аманнă юлташ патне çитнĕ, ăна хăрушлăхсăр вырăна илсе çитернĕ.

Тĕттĕмленсе килет. Тăшман батарейĕ сайрарах пеме пуçлать. Унăн орудийĕсем пĕрин хыççăн тепри лăпланаççĕ. Каçхине 10 сехетре пирĕн пата подкреплени пырса çитрĕ. Çĕнĕ вăйпа хĕснине чăтса тăраймасăр, противникăн ирĕксĕрех каялла чакмалла пулчĕ. Çапăçу хирĕнче вăл çĕмĕрĕлнĕ орудисене, хăйĕн нумай вилнĕ салтакĕсене пăрахса хăварнă.

Тăшмана сывлăш çавăрса илме вăхăт памасăр, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем тăшман улталăн пырса кĕнĕ совет территорине фашистсенчен тасатрĕç.

Оруди наводчикĕ **Н. ИВАНОВ.**

Действующи арми.

(«Правда», июнĕн 27-мĕш).

Аркатса тăкакан атакăна тăшман чăтса тăрайман

КИЕВ УЙРĂМ ÇАР ОКРУГĔ, июнĕн 27-мĕш. (ТАСС). Иккĕмĕш талăк хаяр çапăçу пынă. Артиллерирен, пулеметсенчен тата пăшалсенчен тĕл персе лектернипе пысăк сухатусем тунă пулсан та, тăшман государство чиккин линине çирĕплĕн хӳтлекен капитан Бычковăн батальонĕ çине çĕнĕрен çĕнĕ вăйсем кăлара-кăлара янă. Боецсем вырнаçса тăракан вăрманти пысăк мар уçланкăна тĕттĕм каç хупăрласа илнĕ. Сывăхри хыр вăрманĕнче нимĕçсен снарячĕсем кĕрле-кĕрле çурăлнă.

— Туллаçаççĕ нимĕçсем,—тет старший сержант Коробов юлташ.—Пурнăç лайăхранах мар пулĕ. Ăс паратпăрах ĕнтĕ кĕтмен хăнасене!

Çак сăмахсене çирĕплетсе пекех, тăшман территорийĕ çинче снаряд çурăлнипе тухакан çулăмсем нумайланнă. Совет артиллерисчĕсем противник орудийĕсене çĕр пичĕ çинчен шăла-шăла ывăтнă.

Тĕттĕм каç вĕçленсе килнĕ. Орудисен вучĕ ытларах та ытларах вăйсăрланса пынă. Çак лапкăлăх тăшманпа çĕнĕ тытăçу пуçланасси çинчен калаканă. Ăна кĕтсе илме пурте хатĕр пулнă. Лейтенант Кишенец рота йышăнса тăракан оборона çинине татах тепĕр хут пăхса тухнă. Пытарăнса ларакан пулеметсем патĕнче халех те хĕрӳллĕ ĕç пуçлама хатĕр тăракан боецсем выртнă.

Артиллери дуэлĕ çĕнĕрен хаяр вăйпа пуçланнă. Каç тĕттĕмпе усă курса тăшман вăйсем пухнă, тул çутăлса килнĕ вăхăтра каллех çапăçăва кĕнĕ.

Совет артиллерисчĕсемпе пулеметчисĕсем противник войскисен пуçĕсем çине тонни-тоннипе металл, вилĕм кӳрсен металл йăтăнтарнă. Çак участокра противникăн йышĕ пысăкрах пулнă. Пирĕн ротăна хирĕç противникăн пĕр батальонĕ кĕрешнĕ. Анчах та çакă вăл пирĕн пехотинецсене шиклентермен, вĕсем хушшинче Суворов похочĕсемпе штурмĕсен геройла традицийĕсем, граждан вăрçин боевой традицийĕсем пурăнаççĕ.

Паттăр пулеметчика тăшман персе янă пуля çапса антарнă. Тăшмансем хупăрласа илнĕскер, вăл юлашки минутăччене пеме чарăнман. Анчах пулемет нумай вăхăта лăпланман. Вилнĕ боец выраннe политрук Кругленко тăнă. Позицине хирĕç нимĕçсем икĕ сехет хушши ытла атакăсем тунă, анчах та рота вĕсен штурмне паттăрăн сирĕсе-сирĕ янă. Тăшман речĕсем сайраланнă, унăн вăйĕ чакса пынă.

— Малалла! Сталинăшăн, тăван çĕршывăшăн!—тесе кăшкăрнă рота командирĕ, алла винтовка йăтса пуринчен те малтан тăшман çине виркĕннĕ.

Командир хыççăн боецсем йăлтах çĕмĕрсе тăкакан лавина пек çĕкленсе тăнă. Штыксем çиçĕм пек сутăлса илнĕ. Тăшмансем хушшинче вунпăрăн пăрахнă гранатăсем кĕрле-кĕрле çурăлнă.

Нимĕçсем выраннтан тапраннă, красноармеецсен штыкĕ пырса çаппине чăтса тăрайман.

Çапăçу мĕнпе вĕçленессине Гордиенко юлташăн взвочĕ тунă хăюллă та татăклă маневр татса панă. Тăшман тылне пырса кĕрсе, боецсем унăн каялла чакмалли çулне ӳлсе хунă. Нимĕçсем хĕçпăшалсене пăрахнă, тытăнă парăннă.

Государство чиккисем каллех совет боецĕсен аллинче пулнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Малалли, пуçламĕшĕ 1-мĕш страницăра)

Фронтри чăн-чăн положени çакăн пек ĕнтĕ, çак картинăна эпир Германири радио панă мухтанчăк пĕлтерӳсене хирĕç кăларса тăратма пултаратпăр.

Вăрçă пуçланнăранпа иртнĕ пирвайхи 8 кунăн итогĕсем çакăн пек выводсем тума май параççĕ. Нимĕç командованийĕ шутласа хунă пек питех те хăвăрт çĕнтерӳ тăвасси арканса кайрĕ, Германи фрончĕсем пĕр-пĕринпе сыхăнса кĕрешесси пулмарĕ, нимĕç çарĕн наступлени тăвас вăй-халне çĕмĕрнĕ, совет войскисем вара, кĕрешӳ валли кая юлса вырнаçнă пулсан та, совет çĕрне хӳтлеççĕ, тăшмана хаярăн пыра-пыра çапаççĕ, ăна халран ярса пыраççĕ.

Кăнтăрлахи пĕлтерӳ

Июнĕн 30-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем **Мурманск, Двина, Минск** тата **Луцк** енĕсенче çĕрĕпех çине тăрса тимлĕн çапăçнă.

Фронтăн ытти енĕсемпе участокĕсенче разведчиксен çĕрлехи шыравĕсем пулса иртнĕ, хăшпĕр тĕлте войскăсене çĕнĕлле тăратса тухнă тата артиллери-ен хире-хирĕç пенĕ.

Июнĕн 29-мĕшĕнче **противник Карельски перешеекра** пирĕн государство чикки урлă каçма çине тăрса тата пĕр хутчен мар хăтланнă, анчах ăна кашнинчех пирĕн войскăсем пăталсенченпе тата контратакăсем туса исходнăй положени çине хăваласа янă, противнике пысăк сухатусем кӳнĕ.

Кексгольм енче Германи войскисен икĕ пехотнăй батальона çити вăйпа противник пирĕн войскăсем йышăнса тăракан позицисене хирĕç виçĕ хут атака тунă. Противник государство чикки урлă каялла чакса кайнă, унăн çапăçу хирĕнче 300 çын вилсе юлнă.

Çав кунах **Выборг** енче противник тинĕс десантчĕ антарса хăварма хăтланнă. Пирĕн войскăсем татăклăн çапăçса противник десантне çырана анса юлнă чухне тата çыранра пĕтерсе тăкнă.

Июнĕн 29-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн авиаци противникăнне 53 самолет пĕтерсе тăкнă, хамăрăн 21 самолет çухалнă.

* * *

Себеж районĕнче пулса иртнĕ çапăçура пирĕн истребитель Германин «Ю-52» самолетне пресе антарнă. Противник самолечĕ çунса кайнă. Тăватă летчик парашютпа сиксе аннă, вĕсене тыткăна илнĕ.

* * *

Рудаков юлташ подразделенийĕнчи летчиксем тăшмана хирĕç геройла çапăçаççĕ. Виçĕ кун хушшинче сывлăшри атакăсенче вĕсем фашистсен 13 бомбардировщикĕне истребительне персе антарнă. Карабинец юлташ эскадрильинчи летчиксем те унтан каях мар ăнăçлăн çапăçаççĕ. Сывлăшра пулса иртнĕ пĕр çапăçура вĕсем противникăн пилĕк самолетне персе антарнă, хамăрăн пĕр самолет та пĕтмен.

* * *

Тăшман çине бомбăсем кайса пăрахнă вăхăтра самолет командирĕ Андрианов фашистсен икĕ истребителĕ Кузьменко летчикăн самолечĕ çине тапăннине асăрханă, Кузьменко самолечĕн моторĕ пăсăлнă пулнă. Андрианов юлташне пулăшма васкаса пынă та, пĕр истребительне персе антарнă тата теприне хăваласа янă. Андрианов юлташ хӳтлесе пынине летчик Кузьменко самолета базăна чиперех илсе ситернĕ.

* * *

Тул çутăлнă вăхăтра пирĕн самолет-разведчик О. местечко патнелле противникăн танковăй группи хăварт куçса пынине палăртнă. Çакăн çинчен донесени илнĕ хыççăн, командовани противник машинисен çулне пӳлме чаççене приказ панă. Тăшмана хирĕç советăн пикировка тăвакан бомбардировщикĕсен эскадрильисем вĕсене çĕкленĕннĕ. Пирĕн авиацине танковăй чаçсем хăюллăн та паттăрлăн çапăçса тăшмана çĕмĕрсе тăкнă. Нимĕçсен 15 танкне стройран кăларнă.

* * *

Çĕрлехи истребительсен соединенийĕсем отлично ĕçлеççĕ. Вĕсенчен пĕри, майор Вербов командир пулса ертсе пыраканскер, пĕр каçра тăшманăн 5 бомбардировщикне персе антарнă, çав бомбардировщиксем вăрçă тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнса тăракан объект патне вĕçсе йыма хăтланнă пулнă. Лейтенант Железнов икĕ «Ю-88» бомбардировщикне персе антарнă.

* * *

Германин полковник Ибсен командинче тăракан 179-мĕш пехотнăй полкăн тыткăна илнĕ салтакĕсем каласа панă тăрăх, вĕсен çар чаçĕнчи—Франциран куçарса килнĕ чăсри салтаксенчен нумайĕшĕ Совет Союзне хирĕç пуçланă вăрçăна татăклăнах хирĕç тăраççĕ. Тыткăна лекнисен группи 179-мĕш полкри салтаксем патне çыру янă, унта çапла каланă: «Германири мĕнпур малта пыракан çынсем кураймасăр тарăхакан Гитлер режимĕ Хĕрлĕ Çар аркатса тăкмаллах çапнипе саланса каяссине эпир шансах тăратпăр. Тăвансем—нимĕç салтакĕсем! Хĕрлĕ Çар салтакĕсемпе командирĕсем çапăçура çавтери хăюллă та шиксĕр пулнине эпир вăрçăн темиçе кунĕ хушшинчех курса ĕнентĕмĕр. Хăйсен çĕрне совет салтакĕсем пек çапăçса хӳтлеме тĕрĕс ĕçшĕн кĕрешекенсем çеç пултараççĕ. Совет Союзĕпе унăн çарĕ çинчен Гитлер сараканă усал элĕке ан ĕненĕр. Хăвăрăн хĕçпăаларсене нимĕç халăхĕн чăн-чăн тăшманне хирĕç—фашистла клика тăвăçа тĕллĕр, çав фашистла клика улталаннă миллионшар çынсене вилме вăрçăна хăваласа ярать».

* * *

Совет халăхĕн патриотла çĕкленĕвĕ, ĕçри массăллă героизмĕ кунсеренех ӳссе пыраççĕ тата халиччен пулман вăйпа палăрса тăраççĕ.

Ленинградри Ильич ячĕпе тăракан завода 1940 çулта хĕлле белофинсене хирĕç пынă çапăçусенче аманнă шлифовальщик Попов юлташ пынă. «Çакăн пек вăхăтра, — тенĕ вăл, — пенси çинче юлма пултараймастăп. Фронта тухса кайнă юлташсем вырăнне тăрса ĕçлеме манăн вăй та, опыт та çителĕклех».

Вăрçă пуçлансан малтанхи кунĕнчех Дон-çи-Ростоври заводсенчен пĕринче 20 пенсионер тавăрăннă, вĕсем хăйсен ĕçне ăста пĕлекен токарьсем, котельщиксем, строгальщиксем, формовщиксем. «Эпир 1918 çулта нимĕç оккупантчĕсене хирĕç çапăçнă, — тесе сыраççĕ вĕсем хăйсен заявленийĕнче.—Пирĕн тăван çĕршывăн хаяр хăрушлăх тухса тăнă вăхăтра эпир аякра тăма пултараймастăпăр. Пирĕн тăван Хĕрлĕ Çарăн, авиацин тата Тинĕс-Çар Флочĕн çĕнтерĕвне туптас тесе, эпир аггрегатсем патĕнче хамăрăн вырăнсене çĕнĕрен йышăнатпăр».

* * *

Хĕрарăмсем хушшинче патриотла калама çук пысăк çĕкленӳ çинчен Совет Союзĕн мĕнпур кĕтесĕсенчен пĕлтереççĕ. Орджоникидзе ячĕпе тăракан завода килхуçи хĕрарăмĕсем 100 çын ытла пырса, фронта тухса кайнă агрегатсем вырăнне хăйсене ĕçлеме илме ыйтнă.

* * *

Макс Гельц ячĕпе тăракан заводра стахановец-механик Тянт юлташ, ответлă механизмсен сборкине пĕтермесĕр, виçĕ талăк хушши заводран тухмасăр ĕçленĕ. Çакăн хыççăн виçĕ сехет кансăр, вăл хăйĕн ĕçри юлташĕсене пулăшма пуçланă.

Ленин ячĕпе тăракан машиностроительнăй заводра котельщик Воробьев юлташ Хĕрлĕ Çар ретне тухса кайнă 4 рабочийĕн пĕрченех ăнăçлăн ĕçлесе ĕлкĕрет. Мастер Антонов юлташ хăйĕн подручнăйĕпе Башмаков юлташпа пĕрле, аггрегат çумне оригинальнăй приспособлени туса, çав аггрегатăн тухăçлăхне чылай ӳстернĕ, çакă вăл çара тухса кайнă 5 рабочине улăштарма май панă.

Германи ĕççыннисен чĕрери шухăшĕсем

Юн ĕçсе тăранма пĕлмен фашистла ушкăн пуçласа янă вăрçă Германири ĕççынни массисен ахаль те йывăр пурнăçне татах та ытларах йывăрлатнă. Фашистсем пусмăрласа çапса хĕснĕ нимĕç рабочи класĕ çурма-выçă пурăнать. Хресчен хуçалăхĕ ытларах та ытларах юхăнса пырать. Тăраниччен çиейменни, каторгăри пек йывăр ĕç ĕçсыннисене халран ярать, халăх хушшинче чирлекенсен хисепĕ ӳссе пырать.

Хăрушла тискер террор условийĕсенче Германи халăхĕн чи лайăх представителĕсем хăйсен çĕршывне фашистла пусмăртан ирĕке кăларассишĕн, Гитлерăн вăрçăллă авантюрисене пĕтерсе лартассишĕн, ытти халăхсемпе ырă кӳршĕллĕ отношенисем туса хурассишĕн паттăрăн кĕрешеççĕ. Германин хĕвелтухăç енчи аслă кӳршинче — ССР Союзĕнче — тӳрĕ кăмăллă кашни нимĕç ирĕклĕх тĕрекне, ӳссе чечекленнин чĕрĕ тĕслĕхне курать, фашизма курайман кашни труженик советсен хăватлă çĕршывĕ çине шанчăкпа пăхать.

Пирĕн умра тĕнчери çĕршывсен 1941 çулта Лейпцигра пулнă ярмăркăра Совет Союзĕн павильонне кĕрсе курнă çынсем хăйсен шухăшĕсене сырса хăварнă кĕнеке выртать. Çак кĕнеке вăл —Германири ĕççыннисем ССР Союзĕнчи халăхсен пурнăçĕпе калама çук хытă интереслennине ӳçăн та тĕрĕс каласа паракан документ.

Ярмăркăна курма пыракансене Совет павильонĕпе паллашма чăрмантарас тесе, фашистла правительсем мĕн кирлине йăлтах тунă. Павильона кĕнĕшĕн пысăк хак (5 марка) тӳлемелле тунă, Совет павильонне кĕрекен кашни нимĕçе асăрхаса çӳренĕ. Курма пыракансене хăйсен шухăшĕсене сырса хăварма хатĕрленĕ кĕнеке выртакан пӳлĕмре яланах шпионсем хĕвĕшнĕ. Çакăн çинчен халăх лайăх пĕлнĕ. Пĕрре çакăн пек ĕç пулса иртнĕ. Курма пынă пĕр çын павильон сотрудникĕ патне пынă та çапла каланă:

— Эпĕ хамăн шухăшсене кĕнеке çине çырасшăн, анчах ăна тума май çук, халăх нумай. Сирĕн ăçта та пулин тепĕр кĕнеке çук-и? Манăн пĕр шикленмесĕр çырса хăварас килет.

Ăна паллах ĕнтĕ, çырса хăварма урăх нимĕнле кĕнеке те çук, тесе ответ панă.

Çав çын пăрăнса кайсан, тепĕр нимĕç павильон сотрудникне çапла пăшăлтатса каланă:

— Эсир ăна ан итлĕр. Ăна кунта мĕн тунине сăнаса çӳреме янă...

Çакăн пек условиленче, фашистла шпионажпа хĕсĕрлӳ условийĕсенче, çĕршер нимĕçсем—рабочисем, хресченсем, интеллигентсем хăйсен шухăшĕсене хăюллăн каласа панă, отзывсем кĕнеки çине Совет Союзĕн çитĕнĕвĕсем хăйсене пĕтĕм чĕререн савăнтарни çинчен çырса хăварнă, Германи халăхĕпе Совет халăхĕн туслăхĕ çинчен хăйсен чĕрери шухăшĕсене çырса хăварнă.

«Тĕлĕнмелле! Пирĕн хамăрăн куçсене ĕненес килмест. Германипе Россия яланах туслă пурăнасчĕ».

«Сывă пултăр аслă вырăс халăхĕ! Выставка тĕлĕнмелле чаплă».

«Халăхсен ырлăхĕшĕн малаллах пыр, Совет Союзĕ!».

«Çак выставкăна Российăн кашни тăшманĕ килсе курасчĕ. Ун чухне вăл урăхларах шутланă пулĕччĕ».

«Вырăс халăхĕ пысăк хастарлăхпа тăрăшса ĕçленĕшĕн эпĕ ăна тав тăватăп».

«Роесия, эпĕ сана халĕ кăна пĕлсе илтĕм, санăн аллусенче калама çук пысăк производительнăй вăйсем пур!».

«Российăран эпĕ халичченех тĕлĕннĕ, анчах та плутократине хирĕç мĕнпур средствăсемпе усă курса кĕрешекен наци кăна хуçалăха çакăн пек вăйлă чечеклентерсе ӳстерме пултарать».

«Вырăс халăхĕ, мĕн тери телейлĕ эсĕ!».

«Картинăсем тăрăх эпĕ телейлĕ, хаваслă çамрăксене куратăп. Кӳршĕри аслă государство, çамрăксем пекех, телейлĕ пултăр, пирĕн халăхпа аслă совет халăхĕ хушшинче туслăх пултăр».

Германи халăхĕ ССР Союзĕнчи халăхсем çине ăшă кăмăлпа пăхнине, Германи халăхĕ ăйпе совет халăхĕ хушшинчи туслăх çинчен ĕмĕтленнине палăртса, çавăн пек çырнă нимĕçсем—рабочисем, хресченсем, интеллигентсем.

Совет павильонне хĕпĕртесе пăхса çӳресе, унăн экспончĕсемпе пĕтĕм чĕререн савăнса, нумай нимĕçсем çапах та хăйсен шухăшĕсене кĕнеке çине çырса хăварма хăяйман.

— Совет Союзĕн выставки пире пурне те пĕтĕм чĕререн савăнтарать, — тенĕ пĕр нимĕç павильон сотрудникне, анчах та пирĕнтен кашниех мар хăйĕн шухăшĕсене кĕнеке çине çырма хăять: ăна тума хальхи вăхăтра питех те хăрушă.

Курма пыракан нумай çынсем, хăрушлăх çинчен манса, хăйсен шухăшĕсене сасăпах калана: «Çакă вăл — малашлăх çĕршывĕ!», «Эсир телейлĕ, çакăн пек çĕршывра пурăнакансем!», «Пире Россия çинчен мĕн каланисем вĕсем—ерунда, суя ултав!».

Совет Союзĕ çинчен саракан фашистла ултавпа ĕлкĕн сĕрĕмĕнчен сыхланса юлнă çынсем çавăн пек калана. Çапла каласçĕ, çапла шухăшласçĕ тӳрĕ кăмăллă нумай миллион нимĕçсем.

Хальхи вăхăтра фашистла вăрă-хурахсем вăрçăллă çĕнĕ авантюра пуçларĕç, ССР Союзĕ çине тапăнчĕç. «Çак вăрçа пире,—терĕ Молотов юлташ,—Германи халăхĕ мар, Германири рабочисемпе хресченсем тата интеллигенци мар, илсе кĕчĕç,—вĕсем асап тӳснине эпир лайăх ăнланатпăр,—çав вăрçа пире Германин юншăн çунакан фашистла правителĕсен ушкăнĕ илсе кĕчĕ...» Çак вăрçăра фашизм татăклăнах хăйĕн вилĕмне тупать.

Г. Л.

Германи фашизмĕн ури айĕнче

Норвегири хаçатсенче Германи власĕсем халăха хирĕçле репрессисем çинчен каларакан нумай распоряженисем пичетленеççĕ, мĕншĕн тесен продовольстви тĕлĕшĕнчи положени татах та ытларах начарланса пынă май, халăх массисен кăмăлсăрлăхĕ ӳссе пынă май фашистсем халăха ытларах та ытларах хĕсĕрлеме пуçлаççĕ. Нумаях пулмасть çакăн пек ĕç пулса иртнĕ. Ослора какай лавки умĕнче килхуçи хĕрарăмсем питех те пысăк череччĕ пухăнса тăнă. Картишĕнчен 10—15 сысна тушки тиенĕ грузовик тухнă. Германи офицерĕ, сысна какай çинче лараканскер, сысна хӳрине касса илнĕ те ăна черет çине ывăтнă: «Акă сире какай!», тенĕ. Çапла мăшăлласа кулни хулари пĕтĕм халăха чăтма çук çиллентерсе тарăхтарнă.

Июнĕн 28-мĕш.(ТАСС).

Йăлтах фронт валли

РИГА, июнĕн 27-мĕш. (ТАСС). Советлă Латвири ĕççынисем хăватлă совет патриотизмне кăтартаççĕ. Станоксем умĕнче, паровозсем çинче, уйăрсенче пĕтĕм чĕререн тăрăшса ĕçлесе, тăшмана хăвăртрах çĕнтерес тĕлĕшпе вĕсем Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ.

Ригăри вагонсем тăвакан заводра ĕçлекен формовщик Клявинь юлташ ĕнер пĕр кун нормине 4 сехет хушшинче тултарнă. Формовщиксем — Саулите, Вильчук, Кутис, обрубщик Приедниекс тата ытти юлташсем ĕç нормисене нумай иртерсе тултараççĕ. Хăйсен ĕçне вĕсем нумай творчествăллă пуçарулăх хураççĕ. Литейщик Гайлитис юлташ, детальсене шăратса янă чухне хăй шутласа кăларнă изобретенипе усă курса, нормăна икĕ хут иртерсе тултарнă.

Пиравăр тĕртекен «Мартăн 8-мĕш» фабрикăри рабочисен бригади пăс хуранĕсене икĕ эрне хушши юсас вырăнне виçĕ кун хушшинче юсаса пĕтерме пулнă. Бригадăна слесарь Салинь юлташ ертсе пырать.

Совет авиацийĕн ăнăçлă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 28-мĕш. (ТАСС). «Таймс» хаçатăн Стамбулри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Германи Киевпа Севастополь çине бомбăсем пырса пăрахни çине ответлесе, совет авиацийĕ Константцăпа Сулина çине пырса тапăннисем çак хуласенчи объектсене питех те вăйлăн çĕмĕрнĕ. Константцăра доксемпе нефтехранилищесене пĕтерсе тăкнă. Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, пĕтĕм хулана вут хыпса илнĕ. Совет авиацийĕ пырса тапăннипе çавăн пекех Галац, Браила, Тульча тата Яссы хулисенчи объектсене те вăйлăн çĕмĕрнĕ. «Совет авиацийĕ пырса тапăнни пысăк результатсем панине,—тет малалла корреспондент, — çакăн пек пĕлтерӳ те лайăх кăтартса парать: румынсен хăйсен столицине ирĕксĕрех Бухарестран урăх хулана, Синайя хулине пулмалла, куçарса каймалла пулса тăнă».

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен пресс-конференцийĕ

Июнĕн 28-мĕшĕнче Совет Информаци Бюровĕнче пĕрремĕш пресс-конференци пулса иртнĕ. Пресс-конференцине Совет Информаци Бюровĕн начальникĕн заместителĕ С. А. Лозовский юлташ иртternĕ. Конференцине уçас умĕн каланă сăмахра Лозовский юлташ çапла каланă:

— Пурте пĕлеççĕ, ССР Союзĕ хăй провокацисем туман сĕртенех Германири фашизм агрессийĕн жертви пулса тăчĕ. Хăй тапăннине тӳрре кăларас тесе, фашизм питех те нумай суя элексем шухăшласа кăларать. Германия ССР Союзне хирĕç вăрçă пуçланă пирки Гитлер кăларнă декларацире Геббельс кухнинче хатĕрленĕ пĕр пысăк ултав тата тĕрлĕ калибрлă 99 йышши ултав пур. СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель Заместителĕ тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ кăçалхи июнĕн 22-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каланă сăмахра Гитлерăн декларацийĕ суя пулнине, вăл политикăна картла вылямалли коричневăй сурпан пăтраштарнине кăтартса паче. Гитлерпа Риббентропăн мĕнпур элекĕн суялăхне кăтартса пама та май пулман пулĕччĕ. Анчах та, элек сывлăша пăсать, çавăнпа та обществăллă гигиена тĕллевĕсемпе вăхăтран вăхăта çак господасен мифотворчестви пирки опровержени пама тивет.

Виçĕ тĕслĕх илсе кăтартатăп.

Пĕрремĕш факт. Декларацире Гитлер çапла калать: совет летчикĕсем, хăйсене халех те ĕнтĕ Германи территорийĕн хуçисем тесе шутланине кăтартса парас тесе имĕш, Германи чиккине пăснипе йăпанса пурăннă пулать. Фактсем йăлтах урăххи çинчен каласçĕ. 1941 çулти январăрн 1-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 21-мĕшне çитиччен Германи самолечĕсем ССР Союзĕн государство чиккине 324 хут пăснă, çак вăхăтра Совет самолечĕсем енчен государство чикки урлă çинсăртран 8 хут кăна вĕçсе каçни пулнă.

Германи самолечĕсем совет чиккине нумай хутчен пăсни çине кăтартса, кăçалхи январь уйăхĕнче нота панă хыççăн, унтан март уйăхĕнче тепĕр нота панă хыççăн, пирĕн чикĕне часчасах пăснине кура, кăçалхи апрелĕн 21-мĕшĕнче Германин Мускаври посольне нота панă, çав нотăра кăçалхи мартăн 27-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 18-мĕшне çитиччен Германи самолечĕсем государство чиккине 80 хут пăснине илсе кăтартнă. Анчах та çакă та çителĕклĕ пулман. Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ Германин Мускаври посолне июнĕн 21-мĕшĕнче панă нотăра çаксене кăтартса панă: апрелĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 19-мĕшне çитиччен Германи самолечĕсем совет чиккине 180 хут пăснă. Германи самолечĕсем совет территорийĕ çине 100—150 километр шалалла вĕçсе кĕнĕ тĕлсем те нумай пулнă, çакна, паллах ĕнтĕ, летчиксем ориентировкăна çухатнипе ăнлантарса пама май çук, ăна çакăнпа ăнлантарса парас пулать: çав вĕçевсене разведка тăвас шутпа тăва-тăва иртternĕ. Çапла ĕнтĕ, Гитлер каласа ĕнентерме хăтланнă чăннипе мĕн пулнине пăсса кăтартать.

Иккĕмĕш факт. Г-н Риббентроп хăйĕн июнĕн 22-мĕшĕнче панă меморандумĕнче çапла калана: 1941 çулти март уйăхĕнче Совет Союзĕ Турцине гаранти пани Германи тĕлĕшпе тăшмалла ĕç туни пулать, тенĕ. Анчах та, Совет Союзĕн заявленийĕн пурне те пĕлсе тăма пичетлесе кăларнă текстне эсир астăватăр. Мĕншĕн-ха, чăннипе каласан, çакă вăл Германие хирĕçле тăшманла ĕç туни пултăр? Çакна ăнланса илме йывăр мар кунта: Риббентроп заявленийĕнче урă шухăш мĕн тери сахаллине тата жуликла ĕç мĕн тери нумайййне ăнланса илме йывăр мар кунта. Совет Союзĕ: Турци çине кам та пулин пырса тапăнас пулсан, вăл нейтралитет тытса тăрать, тесе пĕлтернĕ. Хальхи вăхăтра, Германия ССР Союзне хирĕç вăрçă пуçланă хыççăн, нумай çĕршывсем, вăл шутрах Турция, Иран, Афганистан нейтралитет çинчен пĕлтернĕç. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем те нейтралитет тытаççĕ. Акă мĕнле тухать ĕнтĕ: кăй нейтралитет тытасси çинчен пĕлтерекен кашни çĕршыв Германие хирĕç тăшманла ĕç тунă пек тухать!

Виççĕмĕш ыйту вăл — проливсем. Эпĕ пĕлместĕп, г-н Гитлерăн музыкăри пĕлӳлĕхĕ мĕнле пулĕ, анчах та декларацире çак ыйтăва вăл питех те çӳллĕ нота çинче выляса панă. Вăл çапла каланă: В. М. Молотов Берлинра пулнă вăхăтра проливсене Совет Союзне парасси çинчен Гитлерпа калаçнă имĕш. Çакăнта тĕрĕсси ĕвĕрлĕ япала нимĕн те пулманни çинчен Совет правительстви халичченех пĕлтерчĕ. Çакă вăл — Совет Союзĕн политикин тĕп принципĕсене ăнланманран çынсем валли, улталанма тăрăшакан çынсем валли шухăшласа кăларнă суя элексенчен пĕри. Çакна ăна г-н Геббельсăн пылчăклă пӳрнисенчен ӳмсе кăларнă, Геббельс хăй Аполлон Бельведеровскийĕ евĕрлĕ пулма пултарайман пекех, çав элекре те тĕрĕсси нимĕн те çук. Çак ирсĕр элекĕн тĕллевĕ — ССР Союзне хирĕç Турцине хĕтĕртсе кăларасси, Турци халăхĕн кăмăлне пăсасси, нимĕн умĕнче те чарăнса тăмасăр, хăй майлă тăракан çĕнĕ çĕршывсем тупасси пулса тăрать.

Унтан, Лозовский юлташ ютçĕршывсен корреспонденчĕсен ыйтăвĕсем çине ответсем панă.

Ютçĕршыв корреспонденчĕсенчен пĕри çакăн пек ыйту панă: Германия вăрçа хатĕрленни çинчен пĕтĕм тĕнче пĕлсе тăнă вăхăтра мĕншĕн-ха ТАСС нумаях пулмасть, Германия ССР Союзĕпе тунă договор тăрăх хăйĕн обязательствисене пурнăçа кĕртсе пырать, тесе пĕлтерчĕ?

Ыйту çине çакăн пек ответ панă:

Юлашки событисем енĕпе илсе пăхсан Совет правительствин политики уçăмлăн курăнса тăрать. ССР Союзĕпе Германи хушшинчи договора сыхласа хăварас тата пурнăçа кĕртсе пымалла тăвас тесе, Совет правительстви мĕн кирлине йăлтах тунă. ТАСС заявленийĕ — Германия договора пурнăçа кĕртсе пынипе пурнăçа кĕртсе пыманни çинчен ăна калаттарма хăтланса пăхни пулнă. Пуринпĕри те палла, ТАСС панă çав пĕлтерĕве Германире те, унăн вассалĕсем пулса тăракан государствăсенче те пичетлесе кăларман. Çапла ĕнтĕ Германи правительстви хăех, вăл договора пурнăçа кĕртсе пырать тесе калакан пĕлтерĕве пичетлесе кăлармасăр, вăл договора пурнăçа кĕртсе пыраспăн мар пулнине кăтартса парать. Совет правительстви çак утăмĕ Германин чăн-чăн позицине палăртма май пачĕ. Германия хăйĕн ултавлă ĕçĕсемпе çакна кăтартса парать: вăл тĕнчери правăна хăйĕн «тӳрлетĕвĕсене» кĕртет, вăл «каласса татăлакан тепĕр енĕ» çине тапăнма хатĕрленес, сасартăк пырса тапăнас тесе кăна пĕр-пĕрин çине тапăнас марри çинчен договорсем тăвать.

Ютçĕршывсен корреспонденчĕсем Лозовский юлташран вăрçă операцийĕсемпе çыхăнса тăракан информацисене анлăлатасси çинчен ыйтнă.

Лозовский çакăн пек ответ панă:

— Эсир, господасем, Германия тĕнчене хăйĕн информацийĕпе тултарать тесе калатăр. Эсир çавăн пекех пĕлетĕр, çав информаци пуçламĕшĕнчен вĕçне çитнех суя информаци пулса тăрать. Эпир вара пуçран шухăшласа каларасшăн мар. Эпир мĕне тĕрĕслесе пăхнă — çавăн çинчен кăна пĕлтеретпĕр. Информаци хăш чухне кая юлса тухать, мĕншĕн тесен фактсене тĕрĕслесе пăхма тивет.

Малалла, Совет Союзĕн Германири посольствин тата Германин ССР Союзĕнчи посольствин членĕсен кун-çулĕ çинчен панă ыйту çине ответлесе, Лозовский юлташ çапла кăтартса панă: посольствăсен персоналне улăштарса илесси çинчен каласусем пыраççĕ. Çак ыйтупа Мускавра — Германин ССР Союзĕнчи интересĕсен представительствине хăй çине илнĕ Болгари миссийĕ ĕçлет тата ССР Союзĕн Германири интересĕсен представителĕ пулса тăракан Швеци миссийĕ ĕçлет.

Совет Информаци Бюровĕнчен вăрçă ĕçĕсем çинчен калакан пĕлтерӳсем илессипе пресс-конференци ĕçĕн йĕркинчен пĕр-пĕрин шухăшĕсене каласа панă хыççăн, Лозовский юлташ пĕрремĕш пресс-конференцине хупнă.

ХРОНИКА

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1941 çулти июнĕн 30-мĕшĕнче каларнă Указпа Николай Семенович Соколов юлташа Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕн обязанноçĕсĕнченех хăтарнă.

Нимĕçсен тăватă летчикĕ нимĕç летчикĕсемпе салтакĕсене чĕнсе калани

Июнĕн 25-мĕшĕнче Киев çывăхĕнче пикировка тăвакан «Юнкерс-88» йышши бомбардировщик çинче нимĕçсен тăватă летчикĕ анса ларнă: 1916 çулта Вăтаçĕр Силезири Бреславль хулинче çуралнă Ганс Герман, летчик-наблюдатель — 1917 çулта Майна çинчи Франкфуртра çуралнă Ганс Кратц, старший ефрейтор — Брно (Брюн)-Моравия хулинче 1918 çулта çуралнă Адольф Аппель тата радист — 1917 çулта Регенсбург хулинче çуралнă Вильгельм Шмидт.

Вĕсем пурте 54-мĕш эскадрильăн иккĕмĕш группинчи экипаж пулнă. Хăйсен ирĕкĕпе анса ларнă летчиксем мĕнпур нимĕç летчикĕсемпе салтакĕсем патне çыру янă. Аялта эпир çав çырăва пичетлесе каларатпăр:

Нимĕç летчикĕсемпе салтакĕсене

Эпир, нимĕç салтакĕсем, самолет водителĕ Ганс Герман, наблюдатель Ганс Кратц, стрелок Аппель, радист Вильгельм Шмидт пĕр çул хушши ĕнтĕ пĕрле вĕçсе çӳретпĕр. «Ю-88» бомбардировщик çинче эпир Лондон, Портсмут, Плимут çине тата Англири ытти хуласем çине бомбăсем пăрахма вĕçе-вĕçе кайса килнĕ.

Кунтан маларах эпир Францири хуласем тĕлĕнче вĕçсе çӳренĕ. Халĕ ĕнтĕ вырăссен мирлĕ хулисем çине бомбăсем пăрахма пире вырăс фронтне ячĕç.

Эпир хамăра хамăр час-часах çакăн пек ыйту параттăмăр: мĕншĕн-ха Гитлер пĕтĕм тĕнчене хирĕç вăрçать? Мĕншĕн вăл Европăри пĕтĕм халăхсене вилĕм тата аркату кӳрет? Мĕншĕн-ха Германин чи лайăх çыннисем хăйсен тăван çĕршывне хӳтлекен халăхсем пирĕн яракан пулăсенчех вилме тивĕçлĕ? Çак ыйтусем çине пире ответ памарĕç. Эпир кашни кунах çакна куратпăр: вăрçă пĕтĕм халăхсене, вăл шутрах Германи халăхне те, хĕн-хурпа вилĕм кăна кӳрет.

Час-часах пире çакăн пек шухăш канăç памасчĕ: юнлă йытăна Гитлера пула эпир пăрахакан бомбăсенчен нимĕн айăпсăр хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасем пĕтеççĕ, тесе шутлаттăмăр эпир.

Çавăнпа та çак расра эпир бомбăсене никама çиен кӳмелле мар вырăна пăрахрăмăр. Гитлер патĕнчен пăрахса тарас, мирлĕ пурнăç пуçласа ярас шухăш пирĕн тахçанах пулнă, анчах эпир хăранă.

Халĕ ĕнтĕ, Гитлер Российăна хирĕç вăрçă пуçланă хыççăн, хăйне обязательнах вилĕм кӳрекен вăрçăна пуçланă хыççăн, эпир тарма шут тытрăмăр.

Июнĕн 25-мĕшĕнче майор Крафт ертсе пыракан пирĕн группа Киев çине вĕçсе карĕ.

Эпир хамăрăн бомбăсене Днепр çине пăрахрăмăр та хула сывăхĕнче анса лартăмăр.

Эпир анса ларсанах пире хĕçпăаллаппа хресченсем хупăрласа илни вĕсем пире çавăнтах тыткăна илни пире питех те тĕлĕнтерчĕ.

Çакă вăл пире татах тепĕр хут çакна кăтартса пачĕ: совет халăхĕ тимĕр пек çирĕп пĕрлĕхлĕ, кĕрешĕве лайăх хатĕрленнĕ, вăл çĕнтеретех.

Халĕ ĕнтĕ эпир Российăра. Кунта пире питех те лайăх йышăнчĕç.

Тăвансем — летчиксемпе салтаксем, эсир те пирĕн пекех тăвăр. Пăрахăç çынвĕлерен Гитлера, кунта, Российăна куçса каçăр.

ГАНС ГЕРМАН,
ГАНС КРАТЦ,
АДОЛЬФ АППЕЛЬ,
ВИЛЬГЕЛЬМ ШМИДТ.

СССР Верховнăй Сучĕн пленумĕ

СССР Верховнăй Сучĕн пленумĕ суд органĕнсене, Хĕрлĕ Çар тата Тинĕс. Çар Флочĕн ретне призыв тата мобилизаци йĕркипе кайнă çынсене, çавăн пекех вĕçен çемьисене хваттерten куçарас пирки судра пуçарнă ĕçсене чарса лартма хушнă.

Çавнашкал ĕçсене судра татса панă анчах вăл решенисене пурнăçа кĕртмен пулсан, вĕсене пурнăçа кĕртесле не чарса лартмалла. (ТАСС).

Спекулянтсене ответ тыттараççĕ

Совет çĕршывĕнчи кашни ĕççынни тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе хăйĕн пĕтĕм вăй халне тăван çĕршыва тăшманран сыхлас ĕçе, оборона ĕçне хурать. Çав вăхăтрах хăшпĕр çынсем, спекуляцилле ĕçсем туса пуяс ĕмĕтпе, хăйсене кирлĕ-кирлĕ мар таварсем нумай илсе хураççĕ. Çырмапуç (Красноармейски) ялçыннисем Ф. Захарова тата М. Зайцев тăвар илсе хатĕрлесе хума тытăнă. Июнĕн 25-мĕшĕнче вĕсем Шупашкарта 100 килограмм тăвар илнĕ пулнă. Зайцевпа Захаровăна арестленĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» тата «Хатĕр пул» журналсен — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 2539. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 293. Ф. б. 58. 4 п. л.